К 84.89(=Чув)
Ы
Ч-44404

Николай Ыдарай

# Ачалăх куллисем



Национальная библиотека ЧР
4-044404

**Николай Ыдарай**

# Ачалăх куллисем

сăвăсемпе юмахсем

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2012

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув)6-5
Ы 28

**Ыдарай Н.В.**
**Ачалăх куллисем.** Сăвăсемпе юмахсем. — Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2012. — 132 с.

И-44404
Национальная библиотека
Чувашской Республики

© Ыдарай Н.В., 2012

## КУЛĂШ

Мĕн-ха вăл? Çак сăмаха кашни çын, кашни этем хăйне майлă ăнланать, çынсене те çав виç-епех ăнлантарса парать. Эпĕ хам кулăш тенине акă мĕнлерех ăнланатăп.

Аслă тĕнче варринче
Тĕрлĕ йышши халăх пур,
Тĕрлĕ халăх хушшинче
Пĕчĕк кăна ушкăн пур,
Пĕчĕк кăна ушкăнра
Пĕчĕк кăна сăвăç пур,
Пĕчĕк кăна сăвăçăн
Пĕчĕк кăна сăвă пур,
Пĕчĕк кăна сăвăра
Пĕчĕк кăна кулăш пур,
Пĕчĕк кăна кулăра
Питĕ пысăк пулăш пур.

## ТЕЛЕЙĔМ ПУР

Телейĕм пур —
Пурнатăп ирĕк Çĕршывра:
Куратăп тулăх хирсене,
Куратăп ешĕл садсене.

Телейĕм пур —
Кăвак тӳпе ялан умра:
Итлетĕп кайăк юррине,
Куратăп тулăх хирсене.

Телейĕм пур —
Пурнатăп çĕнĕ хулара:
Куратăп пурлăх ӳснине,
Куратăп халăх хавалне.

Телейĕм пур —
Пурнатăп ирĕк Çĕршывра:
Куратăп туслăх ӳснине,
Куратăп халăх хăватне.

Телейĕм пур —
Çыру кăралĕ аллăмра:
Куратăп ĕмĕт çитнине,
Çавна çыратăп хут çине.

## АЧАЛĂХ

Ачалăх вăл — çутă хаваслăх,
Ачалăх нихçан кивелмест.
Ачалăх — чăн чĕрĕ асамлăх,
Анчах та вăл иккĕ килмест.

Аттепе аннене епле савмăн,
Епле манăн тăван хирсене?
Катари куртăм евĕр асамлăн
Килеççĕ вĕсем куç умне.

Ачалăх тĕтри витĕр уççăн
Куратăп пулса-иртнине:
Урамра çаруран, çарапуçăн
Çурхи кун ĕрĕхсе чупнине.

Йăл кулса куç хĕсетчĕ хĕвелĕ,
Халĕ те куç хĕсет сар хĕвел:
Вăл ўсме хал паратчĕ пирчевлĕ,
Хĕрететчĕ çуллен ўт-пĕве.

Ăшă çил те лăпкатчĕ ачашшăн,
Çумăр та ислететчĕ пире —
Пурте ырă çунатлă ачашăн,
Пурте юлĕç вĕсем ĕмĕре.

Çамрăкла вăй илсе çитĕнсессĕн
Аптрамастăн нихçан та вара:
Кайăкла çўлелле çĕкленетĕн,
Улăпла çĕнтерен йывăра.

# АТТЕПЕ АННЕ ТЕ ЭПĔ

*Чăнлав*

Пысăк мар пачах çемье,
Йышлă мар ятак хисепĕ:
Кĕрейместпĕр пĕр çемме —
Аттепе анне те эпĕ.

Ман пирки шав пăтăрмах
Çемьере пулать пĕр вĕçĕм.
— Шыв кӳрсе кил васкарах! —
Ĕç хушать анне хулленçĕ.

Атте темшĕн хирĕçлет,
Шур куçпа пăхса хăлатăн:
— Шыв патне каймастăн, тет, —
Уроксем ларса тăватăн!

Тепĕр чух манпа атте
Çемçерех пулма та хатĕр:
— Тĕмсĕлсе ан лар килте —
Уçăлма, ачам, тухса кĕр!

Эп тумланнă-тумланман
Ман умма тухать аннеçĕм:
— Вăхăт мар халь выляма,
Кĕнеке вула, пепкеçĕм!

Хушăран мана анне
Вак укçа парать те, ăшшăн:
— Чуп, ачам, — тет, — каç енне
Кайса кил кино курмашкăн.

Хирĕçлет атте каллех,
Сывлăша касса пĕр ластăк:
— Салтăн, ывăлăм, халех —
Кинона каçпа каймастăн!

Ĕçлеме хушать атте —
Выляма хистет аннеçĕм:
— Уроксем туса халь те
Ыртăн пулĕ, пĕчĕкçеççĕм.

Хушусем пит хирĕçле —
Тĕлĕнсе кăна тăратăп:
Такама итлемелле —
Ним тума аптратăп.

## АННЕ ПИЛĔ

Эп урок туса килменччĕ —
Лартăм пит ситреллĕ,
Çав кун "иккĕ" эп илсеччĕ —
Пулнăччĕ хўрелле.

Хама туйрăм питĕ çиллĕ,
Пит те хурлă туйрăм.
Аннене çапах та "пиллĕк
"илтĕм" тесе суйрăм.

Ман анне пит хĕпĕртерĕ —
Суйнине пĕлмерĕ,
Ыр сунса мана пиллерĕ:
— Çапла пултăр! — терĕ.

Çитет теççĕ анне пилĕ —
Пур пулас хăвачĕ:
Эп илменччĕ вĕт-ха "пиллĕк",
"Иккĕ" туянсаччĕ.

Вăй хурсах та тăрăшаттăм —
Пурпĕр çăмăл марччĕ:
Вăтамрах шутпа пыраттăм,
"Пиллĕксем" сахалччĕ.

Япăх паллă туянсассăн
Шутсăр кӳренеттĕм, —
Хам сывлаттăм ассăн-ассăн:
— Пиллĕх çитрĕ, — теттĕм.

Шухăша кайса пĕр хушă
Тĕвĕлеттĕм тĕвĕ:
Ах, çапма пĕлмен чĕн пушă
Хуçине те тивĕ!

Пĕрре çеç суйса курсаччĕ —
Урăх суяс марччĕ —
Лайăх урок пачĕ
Çав суялăх саламачĕ.



## АСАННЕ
*Вăйă*

— Ах, асанне, асанне,
Ахлатса мĕн тăватăн?
— Ахлатса çĕр чаватăп.
— Çĕр чавса мĕн тăватăн?
— Çутă укçа шыратăп.
— Çут укçапа мĕн тăван?
— Шурă катан илетĕп.
— Шур катанпа мĕн тăван?
— Шурă хутаç çĕлетĕп.
— Шур хутаçпа мĕн тăван?
— Хура чулсем пухатăп.
— Хура чулпа мĕн тăван?
— Хурчăкана хăратăп.
— Хурчка сана мĕн турĕ?
— Хуçалăха тĕп турĕ.
— Апла пулсан, тупăшар —
— Тĕрĕслĕхе палăртар.

(Асаннепе хурчка тупăшаççĕ. Асанне чĕпписене хӳтĕлет, хурчка унăн чĕпписене тытма тăрăшать. Хурчка чĕпĕ тытайсан вĕсем ылмашаççĕ те вăйă çĕнĕрен пуçланать).



## АРБУЗ

*Выляв-шутлав*

Арбуз килсе кӗрет те
Ӑмсантарать пурне те!
Ахван ҫине пӑхать те:
— Ах, ытла та тутлӑ! — тет.
Ӑрсай ҫине пӑхрӗ те:
— Ӑс пӗтмелле лайӑх! — тет.
Верук ҫине пӑхрӗ те:
Вӗлерес пек сиплӗ! — тет.
Курти ҫине пӑхрӗ те:
— Кун пек ҫимӗҫ ҫук-тӑр! — тет.
Макҫӑм ҫине пӑхрӗ те:
— Май ҫук паха ҫимӗҫ! — тет.
Пуркка ҫине пӑхрӗ те:
— Пылтан тутлӑ ҫимӗҫ! — тет.
Саврук ҫине пӑхрӗ те:
— Савӑнмалли ҫимӗҫ! — тет.
Ҫумкка ҫине пӑхрӗ те:
— Ҫырлахтаран ҫимӗҫ! — тет.
Ухван ҫисе пӑхрӗ те:
— Ух, ытла та ырӑ! — тет.
Хумма ҫисе пӑхрӗ те:
— Хуплуран та тутлӑ! — тет.
Чаппук ҫисе пӑхрӗ те:
— Чаплӑран та чаплӑ! — тет.
Шуркка ҫисе пӑхрӗ те:
— Шутсӑр тутлӑ ҫимӗҫ! — тет.
Эрхип ҫисе пӑхрӗ те:
— Эмелрен те сиплӗ! — тет.
Арбуза пит мухтарӗҫ.

## АЙВАН

*Пулăм*

Айван кайнă вăрмана
Алхастарма йăмрана:
Арлан тухнă ахăрса —
Айван тарнă макăрса.

Айван кайнă вăрмана
Калаçтарма кăмпана:
Куян тухнă кулянса —
Айван тарнă хурланса.

Айван кайнă вăрмана
Çăвăнтарма çăкана:
Тилĕ тухнă тилĕрсе —
Айван тарнă ӳхĕрсе.

Айван кайнă вăрмана
Çырлахтарма çăкана:
Кашкăр тухнă ташласа —
Айван тарнă пашкаса.

Айван кайнă вăрмана
Туя чĕнме туйрана:
Упа тухнă юрласа —
Айван тарнă уласа.







# АСЛАТИЛЛĔ ÇУМĂР

Çил ачи вăранчĕ те ирех
Ашкăнма пуçларĕ юриех:
Аслатин мăкланнă хăлхине
Кăтăкларĕ — сирчĕ ыйхине.
Ват сухал çиленчĕ çав тери —
Çиленсен çилли ун пит вĕри.
Ыйăхне сăлтавсăр татнăран
Урипеле тапрĕ пур вăйран,
Тарăх çулăмне кăшт пусарма
Вырăнне пуçларĕ тустарма,
Ним тума пĕлмесĕр пысăк тарăхне
Турткала пуçларĕ вăрăм мăйăхне,
Чĕнсе илчĕ чĕмсĕр тарçине,
Кўлме хушрĕ хўхĕм лашине,
Кўлме хушрĕ ылтăн пўмлине
Вутлă хĕçне тытрĕ аллине.
Вăл вара чун-халĕ кўтнипе
Кустарса çўрерĕ кунĕпе
Ял, хула, çаранлăх çийĕпе
Мĕн-пур пек вăй-халĕ çитнипе.
Ăш-чикри хаярлăх хĕрнĕрен
Вăл силле пуçларĕ йĕркерен
Çут мерчен тултарнă миххине —
Пĕлĕт пуххине.
Ун нумай пĕрмеллĕ миххинчен
Чарăнмасăр тăкăнчĕ мерчен,
Тăкăнчĕ мерчен —
Савăнчĕ ĕçчен!

## АКТАЙ

*Пулмăш*

Актай кайнă акана —
Ака туса ывăннă,
Ака туса таврăнсан
Вилнĕ пекех çывăрнă.

Вилнĕ тесе ун патне
Вĕт кайăксем пухăннă, —
Канса выртан çын çине
Тĕрлĕ енчен тапăннă.

Актай сиксе тăнă та
Уяр çине утланнă:
Вĕт кайăксен пуххине
Учĕпеле тапăннă.

Пăрт сикнĕ те пăрçасем
Куç умĕнчен çухалнă, —
Шăркасемпе шăрчăксем
Шăтăксене пытаннă.

Сарă-сарă Таракан
Сак çурăкне пытаннă.
Хăла-хăла Хăнкăла
Хăтлă хушăк шыранă.

Хăтлă — хушăк тупайман —
Пĕр çурăка хĕсĕннĕ,
Хĕсĕк çĕрте пулнăран
Хут листи пек çӳхелнĕ.

## АРПАШУ

*Пулмăш*

Автан ирех вăранать,
Анасласа сас парать:
— Вак-вак-вак,
Ватăлса та çитĕр ак!
    Анчăк куçне уçать те
    Ахăлтатса вĕрет те:
    — Шим-шим-шим,
    Шикленмелле пулать-шим?
Вăкăр çӳрет вăйхăнса,
Вăй пуррипе мухтанса:
— Мăр-мăр-мăр,
Ман умма тухса ан тăр!
    Кушак меллĕн кулкалать,
    Куç хĕссе çапла калать:
    — Хам-хам-хам,
    Хам хӳрене хам сыхлам!
Сурăх çӳрет суйланса
Сухан хуппи суйласа:
Ку-ку-рук,
Куç умĕнче апат çук!
    Çерçи вĕçет сиккелет,
    Çĕнĕ кĕвĕ кĕвĕлет:
    Ка-ка-как,
    Калаçу ăнмасть никак!
Хур калаçать хумханса,
Хураçкана хурласа:
Мук-мук-мук,
Мухтаннипе усă çук!

## АРĂСЛАН

*Шўтлев*

Ака çинче,
Ирхи апат тĕлĕнче,
Тепĕр тĕрлĕ — рано утром —
Хусаналла тухса утрăм.

Утсан-утсан,
Хулпуççи халтан кайсан,
Лев гривастый — царь зверей —
Тухса тăчĕ поскорей.

Арăслан:
Йнлантарчĕ вырăсла:
— Здесь дорогу не найдешь,
К живодеру попадешь!

Мĕн тăвас?
Мĕнлерен ман хăтăлас?
Кун пек чух мĕн тумалла? —
Пуç ватса ăс тупмалла!

Эп вара,
Эрлĕк пуснă хутлăхра,
Тутарлапа хутăшла
Юмахларăм чăвашла:

Ал парма-ха Аслине,
Арăслан-бабай, нихаль?
Çул çўрекен çынсене
Тапăнма хушман вĕт халь!

Арăслан,
Ман сăмаха ăнкартсан,
"До свиданья!" терĕ те —
Куç умĕнчен çĕтрĕ те!



Çавăнпа
Çывăх эпĕ Кулăшпа:
Шўтлеврe те, акă кур,
Мĕнле пысăк пулăш пур.

## АЛИ-ПАТТĂР
*Хайлав*

Авалхи кунсенче,
Çак таврари çĕрсенче,
Али-паттăр пулнă, тет
Асапланса ӳснĕ, тет.
Вăл пит ăслă пулнă, тет,
Вăл пит вăйлă пулнă, тет,
Ĕçлĕ халăх нушине
Питĕ лайăх пĕлнĕ, тет, —
Усалсемпе ютсенчен
Хӳтĕлесе тăнă, тет.

## АНЧĂК — ЙЫТĂ
*Йăпав*

Пĕринче,
Пĕр илемлĕ ир çинче,
Анчăк ыйтнă хуçинчен:
— Кам-ши эпĕ çĕр çинче?
Пытармасăр куллине,
Хуçи каланă Йыттине:
— Вĕрен пулсассăн хытă,
Пур çĕрте те эсĕ —
Йытă,
Хӳрӳ пулсан хутланчăк,
Хуть ăçта та эсĕ —
Анчăк!

***

Ак халь ăнланчĕ Анчăк —
Анчăкра пур шанчăк.

## АКĂШ

Акăша курман пулсан
Çырма хĕрне анса кур:
Шурă хур çине пăхсан
Акăш теме майĕ пур.

Акăшпа хур пĕр йăхран,
Акăшпа хур пĕртăван:
Акăша курас пулсан
Хур теме те пултаран.

Акăш шурă ĕмĕрне,
Мамăк пек вăл, тупата!
Çак илемлĕ сăн çине
Именетĕн пăхма та...

Акăш мăйĕ пĕкĕ пек,
Сăнĕ питĕ чиперкке, —
Ăçтан пулнă çавăн пек
Килĕшӳллĕ кĕлетке!..

Акăша май çук мухтаççĕ,
Кăмăллаççĕ ăна пит:
Шур пике тесе кураççĕ,
Вăл чăнах та — Патшапи.

Шурă акăш пит хитре,
Шурă акăш пит чипер.
Сăрă ил те хӳтлĕхре
Хут çине ăна ӳкер.

Национальная библиотека Чувашской Республики

## АХ-АХ-АХ

Ах-ах-ах,
Ахах тупнă пĕр ухмах:
Ахах пĕрчи тупнă та:
Ах-ах-ах,
Тупрăм эп ахах,
Тупăнсан татах —
Пулĕ ик ахах,
Тупăнсан татах —
Пулĕ виç ахах,
Тупăнсан татах
Пулĕ тват ахах.
Тупăнсан татах —
Пулĕ пилĕк ахах...
(Йăлăхиччен тăсăлать).

## АХ
*Йăмах*

Авалхи пек каласан,
Авалхи пек юптарсан,
Ах çырминче Ах ларнă,
Ахалтенех ахлатнă.
Ахальтенех ахлатса
Ахальтенех йăлăхсан,
Ах Мăрха пек хутланнă,
Ахăрм çине утланнă.
Ахрăм çине утланса
Ахпўрт ялне вĕçтернĕ, —
Ахпўрт ялĕн халăхне

Ахпа хӑртса пӗтернӗ.
Ахпӳрт ялӗн ҫыннисем
Ахран халь те хӑраҫҫӗ,
Ахлӑ сӑмах тухсанах
Ахӑлтатма пуҫлаҫҫӗ:
— Ах, ах, ах ӗнтӗ,
Ахлатнипе мӗн ӗнтӗ?
Ахлатсан та пурпӗрех
Ахах ҫӳлтен ҫӑвас ҫук,
Ахах ҫӳлтен ҫусан та
Ахмат мучи тупас ҫук,
Ахмат мучи тупсан та
Ахаллӗнех парас ҫук,
Ахаллӗнех парсан та
Ахах усса пырас ҫук.
Ах, ах, ах ӗнтӗ,
Ахлатнипе мӗн ӗнтӗ?
Ахпа асап куриччен
Ахлатмасӑр ӗҫ тӑвар,
Ахлатмасӑр ӗҫлесех
Акӑш-макӑш ыр курар.

## ӐСАНСЕМ

Ӑвӑс ҫинчи Ӑсана
Эп каларӑм ӑс парса:
— Ӑсан-тусӑм, ӑсанах
Ӑшӑ енне васкаса!..

Ӑсан, мана итлесен,
Хуравларӗ ҫапларах:

— Çак таврари ăсансен
Хĕл каçмалла çакăнтах.

Ăвăс çинчи ăсана
Ăнăçлăх эп пиллерĕм:
— Хăв çуралнă вырăна
Нихăçан ан ман, — терĕм.

## БЕГЕМОТ

*Йăмха*

Куçне уçнă-уçманах
Çутăлнине туйсанах
Бегемот шыва чăмать.
Шыва кĕрсе кайсанах,
Шыв сулхăнне туйсанах
Бегемот шывран тухать.
Тип çĕр çине тухсанах,
Типшĕрнине туйсанах,
Бегемот шыва чăмать.
Шыва кĕрсе тухсанах,
Шыв сулхăнне туйсанах
Бегемот шывран тухать...



## ВИÇĔ СУНАРÇĂ

Петĕркке те,
Тимĕркке те,
Ухтеркке те
Аван пулнă сăн енчен,
Аван пулнă ăс енчен.

Петĕркке те,
Тимĕркке те,
Ухтеркке те
Кавсăличчен сухара
Каяс тенĕ сунара.

Петĕркке те,
Тимĕркке те,
Ухтеркке те
Улма çисе çупала
Утнă такăр çулпала.

Петĕркке те,
Тимĕркке те,
Ухтеркке те
Калаçнипе сисмен те
Ката хĕрне çитнĕ те.

Петĕркке те,
Тимĕркке те,
Ухтеркке те
Хăранă та купаран
Халсăр пулнă ураран.

Петĕрркке те,
Тимĕркке те,

Ухтеркке те
Пăши тĕлне пулнă та
Пăштик хытса кайнă та.

Петĕркке те,
Тимĕркке те,
Ухтеркке те
Сехĕрленсе пĕтнĕрен
Селĕпленнĕ чĕлхерен.

Петĕркке те,
Тимĕркке те,
Ухтеркке те
Ят варласа курнăран
Ялтан тухман урăхран.

## ВĂРККА

*вьюрок*

Вăрăм çула тухсассăн
Вăрăм-вăрăм утрăм эп,
Вăрăмлатса утсан та
Вăрăмхана çитрĕм эп.

Вăрăмхара — вăрманта
Вăрттăн кайăк пурăнать,
Вăрттăнтарах вырăнта
Вăрттăн сасă кăларать.

Вăрăмхари çĕрсене
Вăрттăн çитсе курнă эп,

Ăрттăн кайăк юррине
Ăрттăн ҫырса илнĕ эп.

Ăркка пысăк кайăк мар,
Ăркка ытла пĕчĕк мар.
Ăрттăн ҫĕрте юрлама
Ăркка тени пит хастар:

Ăркка ятлă пулатăп,
Ăрăмхана саватăп,
Ăрттăн ҫĕрте ырлатăп —
Ăрттăн йăва тăватăп.

— Ăркка ятлă пулатăп,
Ăртти-ăртти утатăп,
Ăртти-ăртти чупатăп,
Ăртти-ăртти юрлатăп.

Ăркăш вĕҫес пулсан та
Ăр! ҫаврăнса пăхатăп,
Ăр-хураха курсанах
Ăркăнса ҫех таратăп.

## ĔШЛЕПЕ ТИЛĔ

*вăлтав*

Ĕшле йытă суйланса
Сăмах ваклать Тилĕпе:
— Ҫĕр ҫул тăрăп сыхласа —
Тумна хывса илĕпех.

Сарă Тилĕ Вĕшлене
Ак мĕнлерех хуравлать?
— Вĕшле тулнă тĕнчене —
Кашни мана хураллать,

Эс вĕт ăслă йытах мар —
Сан пек йытă ял тулли,
Мана кĕтсе ан та лар —
Ан пул, тусăм, ял кулли.

Вĕшле çакна илтет те —
Куç умĕнчен çĕтет те.

***

Çавăн пек вăл: тепĕр чух
Çавра сăмах питĕ чух.

## ГОРИЗОНТ

Çула тухрăм ир çинче —
Питĕ вăрăм пулчĕ çул:
Горизонт ытла инçе —
Ун патне çитме май çук.

Çул-йĕрсем виçе-виçе
Эп курмарăм ăнăçу:
Горизонт çаплах инçе —
Ун патне çитме май çук.

Горизонт пит инçерен
Юмахлам-ха çĕнĕрен...
(Йăлăхиччен тăсăлать юмах).

## ĔÇЛЕÇИ*

*Кĕпшĕл юрри*

Ака тунă вăхăтра
Ансухланса тăратăн —
Кĕпшĕл кĕвĕ пуçлать те
Ансухланма манатăн:

— Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи,
Ĕçлемесен ан та çи!

Пăри вырнă вăхăтра
Пăркаланса тăратăн —
Кĕпшĕл сасă парать те
Пăркаланма манатăн.

— Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи,
Ĕçлемесен ан та çи!

Сĕлĕ вырнă вăхăтра
Сĕлкĕшленсе тăратăн —
Кĕпшĕл сăвă калать те
Сĕлкĕшленме манатăн:

— Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи,
Ĕçлемесен ан та çи!

Тулă вырнă вăхăтра
Тулайланса тăратăн —

* Ĕçлеçи — кĕввине кура панă кайăк ячĕ, тепĕр тĕрлĕ — сĕлĕ кайăкĕ, тĕп ячĕ — кĕпшĕл, вырăсла — овсянка

Кĕпшĕл çемĕ пуçлать те
Тулайланма манатăн:

— Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи,
Ĕçлемесен ан та çи!

Урпа вырнă вăхăтра
Урмăшланса тăратăн —
Кĕпшĕл юрă пуçлать те
Урмăшланма манатăн:

— Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи,
Ĕçлемесен ан та çи!

## КĂРККАПА АЧА

Каратташĕнче çӳрет кăркка
Ятуллăн таплатса,
Ир пуçласа каçчен лăркать
Хăйне хăй йăпатса.

Умма тăрса пуçне çĕклет —
Те пур калаçмалли,
Те ун апат ыйтас килет,
Те кирлĕ çимелли...

Ула-чăла чăпар кăркка,
Эс уççăн юмахла,
Тĕлли-паллисĕр ан лăрка
Кала ăнланмалла.

Вара санпа каҫпа-ирпе
Килсе пуплешӗп, пулӑп тус.
Сӳтсе те явӑпӑр пӗрле
Нумай-нумай ыйту.

## КӐРККАПА ХУР
*Юптару*

Капӑр тумлӑ Кӑрккана
Урамра курать те Хур
Пуҫарса ярать сӑмах:
— Ӑҫтан илтӗн эс ҫакна,
Кун пек ситцӑ ӑҫта пур —
Пӗлтерсем мана часрах.

Кӑркка хӑйӗн чӗлхипе
Мӑкӑр-мӑкӑр сӑмахлать —
Ӑнланса илме май ҫук.
Ӑнланма май ҫуккипе
Пуҫланмасӑр татӑлать
Ҫакӑ туслӑ калаҫу.



## КАЧАКА

*Пулмăш*

Кайнă пулнă Качака
Кикен çиме вăрмана,
Килнĕ чухне каялла
Путса ларнă çырмана.
Мĕн тумалла? —
Качакана çăлмалла!
Ашак килнĕ аякран —
Качакана çăлайман,
Ăсан килнĕ катаран —
Качакана çăлайман,
Вăкăр килнĕ мĕкĕрсе —
Качакана çăлайман,
Кĕсре пынă кĕçенсе —
Качакана çăлайман,
Пăши çитнĕ пăшăхса -
Качакана çăлайман,
Така çитнĕ таплатса —
Качакана çăлайман,
Тилĕ чупнă тилĕрсе —
Качакана çăлайман,
Ӳпре вĕçсе пынă та —
Качакана çăлнă та!



## КĂРККАПА КАМПУР

Кăркка тĕлĕннĕ пит те
Хура питлĕ Кампуртан:
— Ма çумастăн эс питне
Е хăратăн-и шывран?

Кампур сиввĕн пăхнă та
Хуравланă Кăрккана:
— Юратмастăп ытла та
Эпĕ сан пек лăркана!..

— Ах, пĕлесчĕ, — тет Кăркка, —
Сан пекки тата кам пур?
Хирĕçет леш: — Ан лăрка,
Ман пекки тата кам пур!

## КАШКĂРПА ТИЛĔ

Кашкăр уçлăх хĕрринче
Курах кайнă Сар Тилле
— Тилĕ тусăм, çут тĕнче
Тăвăрланчĕ-им епле?..

Сарă Тилĕ Аптраман,
Сăрне паман Кашкăра:
— Эй, хисеплĕ Кашаман,
Ытлашши ан кăшкăрах...

Чарраймасăр çиллине
Кашкăр хуçнă çирĕке:

Хывса пар та кĕрĕкне,
Хăвна ярăп ирĕке!

Кашкăра йĕплет Тилли:
— Сан пекки тĕнче тулли,
Тум хывсассăн кашниех
Мĕскер юлĕ ман çие?..

Тилĕ Кашкăр умĕнче
Илĕртӳллĕн пуç таять,
Кашкăр туйса иличчен
Вăрманалла ваш! тăвать.

***

Тискер Кашкăр умĕнче
Тилĕ пек те пулмалла:
Тимсĕрле пуç хуриччен
Тимлĕхпе юп курмалла.

## КАЧАÇКАПА ХУРАÇКА

Ĕлĕк те мар, авал мар,
Ĕнентерме çăмăл мар,
Çакă çутă çĕр çинче,
Ырă хуçа килĕнче,
Пурăннă-мĕн ик аçка:
Качаçкапа Хураçка.
Кĕске ăслă Качакан
Ячĕ пулнă Качаçка.
Хура çăмлă анчăка

Ят та панӑ — Хураҫка.
Пӗрре, ҫурхи латсӑр кун,
Ҫапса ҫумӑр ҫунӑ кун,
Кӗске ӑслӑ качака
Канса выртнӑ ӳплере.
Хура ҫӑмлӑ Хураҫка
Ҫумӑр тӳснӗ ирӗкре.
Ытах шӑнса кӳтнӗрен,
Сивӗ чуна витнӗрен,
Хура ҫӑмлӑ Хураҫка,
Ӳпле умне пынӑ-ҫке:
— Ырӑ тусӑм, Качака,
Хӗрхенсемччӗ анчӑка,
Кӳртейсемччӗ ӑшӑнма.
Качака вӗт йышӑнман:
— Килнӗ йӗрпе ута пар,
Эсӗ шӑнни мана мар.
Йӗпе тумлӑ эс пит те —
Чире ерӗп эпӗ те.
Ах, мӑнтарӑн анчӑка
Йышӑнман ҫав качака.
Анчӑк утнӑ ҫаврӑнса
Шӑпи ҫине хурланса.
Вӑхӑт иртнӗ кӑшт кӑна —
Хӗвел тухнӑ тӳпене.
Хӗвел савнӑ таврана —
Сапаланӑ ӑшшине.
Ҫумӑр ҫуса кайнӑран
Курӑк тухнӑ ҫӑп-ҫӑра,
Хавхаланса Качаҫка
Курӑк ҫинӗ улӑхра.
Сиккелесе Качаҫка

Вăй вылянă улăхра.
Вут пек шăрăх пулнă кун —
Ĕçес килсе кайнă ун.
Качăр-качăр качака —
Кĕске ăслă Качаçка
Чупса аннă шыв хĕрне —
Тăснă анчах тутине...
Çыран хĕрри хăпнă та —
Айван шыва путнă та.
Хăранипе Качаçка
Йĕрсе янă: "мекке-кек!
Вилĕм çитрĕ пуль васка,
Ăçтан тухрĕ ку инкек!
Анчах унăн телейне
Çитсе тухнă çыр хĕрне
Хура çăмлă Хураçка:
— "Ан йĕр, тусăм Качаçка!"
Анчăк шыва чăмнă та —
Тусне çăлса тухнă та.
Çăлăнсанах качака
Алă панă анчăка:
— "Тусăм, мана эс каçар,
Текех урлă пулар мар:
Атя пĕрле тус пулар,
Килĕштерсе пурăнар".

## КУЯНККА ХĂНАРА

*Кулăш*

— Каласамччĕ, Куянкка,
Ăçта пулса куртăн-ха?
— Паян эпĕ — Куянкка,
Анкартинче пултăм-ха:

Йăмралăхра-ĕшнере,
Хăвалăхра-хӳтлĕхре.

— Каласамччĕ, Куянкка,
Камсене эс куртăн-ха?
— Куртăм эпĕ виçĕ хĕр:
Аслăраххи — Аруçça,
Вăталăххи — Варуçça,
Чи кĕçĕнни — Кĕтерук,
Ун пек хитри урăх çук.

— Каласамччĕ, Куянкка,
Ма унта эс кайрăн-ха?
— Каяс терĕм кĕтнĕрен,
Хăна пулма чĕннĕрен:
Аруçça та пыр терĕ,
Варуçça та пыр терĕ,
Чи кĕçĕнни Кĕтерук
Виçĕ хутчен пыр терĕ.

— Каласамччĕ, Куянкка,
Унта мĕскер çирĕн-ха?
— Мана манса тăмарĕç —
Мăй таранах сăйларĕç:
Аруçça кăрт* çитерчĕ,
Варуçça кăрт çитерчĕ,
Чăн кĕçĕнни — Кĕтерук
Çуллă хуплу çитерчĕ.

— Каласамччĕ, Куянкка,
Унта мĕскер ĕçрĕн-ха?

* Кăрт — сĕт вĕретсе тунă çимĕç

— Мана манса тăмарĕç —
Мăй тариех сăйларĕç:
Аруçça чей ĕçтерчĕ,
Варуçça чей ĕçтерчĕ,
Чăн кĕçĕнни — Кĕтерук
Шерпет туса ĕçтерчĕ.

— Каласамччĕ, Куянкка,
Каçпа кампа выртрăн-ха?
— Мана манса каймарĕç —
Майлă çĕре вырттарчĕç —
Аруçça çĕре сарчĕ,
Варуçça çĕре сарччĕ,
Чăн кĕçĕнни — Кĕтерук
Хăйпе пĕрле вырттарчĕ.

Каласамччĕ, Куянкка,
Мĕнле тата саврĕç-ха?
— Мана манса тăмарĕç —
Ачашласа йăпатрĕç:
Аруççи — кив çулăкпа,
Варуçça — чĕр хулăпа,
Чăн кĕçĕнни — Кĕтерук
Çемçе кăна алăпа.

— Каласамччĕ, Куянкка,
Мĕнле тухса килтĕн-ха?
— Мана пурте юратрĕç —
Аруçça алă парса,
Варуçça алă парса,
Чăн кĕçĕнни — Кĕтерук
Виçĕ хутчен чуп туса.

## КАППАЙ АВТАН

*Кулмăш*

Ир çинче,
Кил хушшинче,
Çур сехет те пулĕ сахалтан,
Юн тăкса тĕрмешнĕ ик Автан.
Иккĕшенчен пĕри
Çĕнтерчĕ, — сĕмсĕрри.
Вара, çатан çине ларса,
Çунат çапса, çăвар карса,
Мухтанас шутпа-тăр,
Павра пуçланă паттăр:
"Ку-ку-ру-ку-кук!
Мана никам та çĕнес çук!
Ман пеккине никам курман!
Вăкăра çĕнме те вăй пур ман!
Ман пекки
Тĕнчере те урăх çук!
Ку-ку-ру-ку-кук!"
Юрласа пĕтернĕ çех Автан,
Вĕçсе-килсе таçтан-муртан,
Çăхан çак паттăр Автана
Йăтса та кайнă вăрмана.

***

Ан пул каппай Автан! —
Тесе каланă авалтан.



## ĂМАНПА ХĂЛАТ

*Юптару*

— Хăлат — хăватлă кайăк,
Еплерех вĕçетĕн лайăх!
Сан пек вĕçсе курасчĕ ман —
Ăмсанса калать Ăман.

— Хăлат — хăватлă кайăк,
Сывлăша çĕкленнĕ майăн,
Ăс парса калать ăна:
— Ăнланайăн-ши мана,
Пулас тесен Хăлат —
Вĕçме кирлех хăват!

## КУЯНПА КАШКĂР

Куян Кашкăр çурине
Тĕл пулать пĕр ирхине.
Тĕл пулать те, хайхискер,
Ятлаçа пуçлать: — Тискер!
Сирĕн мĕнпур аçăр-аннĕрсем —
Пурте пирĕн тăшмансем!
Ак парăп та çиленсе —
Кайса ӳкĕн çĕкленсе,
Лектерĕп те вирелле —
Кайса ӳкĕн хирелле,
Çапмаллипе çапăп та —
Вилсе выртăн çавăнтах!
Сиксе тухать Кашаман —

Çулăхать вăл çилĕпе
Куян çумне çилĕм пек:
— "Кам хăять ман ачама
Сив сăмахпа ятлама?!"
Куян чунĕ шарт! сикет.
Мĕн пулать те, мĕн килет,
Инкек çитрĕ — сăлтав туп!
Куян калать: — "Кашкăр тус,
Ан хăрат-ха ман чуна
Эп ăс патăм ачуна:
Тĕл пулсассăн тăшмана
Ан пул, терĕм, тăмана.
Пĕрре çап та çиленсе —
Кайса ўктĕр çĕкленсе,
Пĕр лектер те вирçелле —
Кайса ўкĕ хирелле,
Çапассипе çапах та —
Вилсе выртĕ çавăнтах!"
Кашкăр çакна илтсенех
Мухта пуçлать мĕскĕне.
Пулнă иккен çак Куян
Чее ăспа пит пуян, —
Чееленме пĕлнĕрен
Çăлăнать вăл вилĕмрен.



# КУЯНПА ЧĂРĂШ

*Юмах*

Куян çури пĕринче
Такамран тарать,
Пĕчĕк Чăрăш айĕнче
Чарăнса тăрать.

Куян питĕ хĕвĕнсе
Чăрăшпа пуплет:
Ешĕл тусăм, чĕр йĕпсем
Туянтар-ха, — тет.

Ешĕл тусĕ тĕлĕнсе
Чăр пăхса илет:
— Сана мĕншĕн чĕр йĕпсем
Кирлĕ пулчĕç? — тет.

Куян хăйĕн мелĕпе
Шухăшне вĕçлет:
— Шикленмесĕр Чĕрĕп пек
Пурăнасчĕ, — тет.

Чĕрĕп пĕчĕк куяна
Лăпкăн вĕрентет:
— Шикленме пĕлни кăна
Саншăн хӳтлĕх, — тет.

## КĂТКАЙ

I

Юплĕ-юплĕ юмах — чун уççи,
Эп пулам-и кучух ун хуçи.
Эп нихçан юптарма ӳркенмен,
Ан ӳркенĕр анчах итлеме.

II

Каш кашлан сĕм хура вăрманта
Пурăнайнă пĕр кăткă çемйи:
Пĕчченшер ĕçлемен нихăçан та,
Ĕçре пулнă вĕсен чун çемми.
Çак ĕрчевлĕ, пĕр тан çемьере
Ӳснĕ пулнă пĕр çамрăк Кăткай:
Пултаруллă вăл пулнă ĕçре,
Пур ĕçе те пултарнă самай.
Пĕр çитменлĕх çех пулнă мĕн ун —
Мухтанма пит юратнă çак чун.
Йыш çинче, ĕç туса палăрсан,
Кăшкăрашнă тарне кăларса:
— "Кам ĕçлерĕ çакна? Эп мар-и?
Эп анчах пуринчен маттурри".
Çак айван вăй илсе пынă май
Каппайма пикенет ытларах:
— "Эп анчах ĕç ачи, эп Кăткай,
Ман пекки çуралман таврара.
Эп пĕлетĕп çĕр тĕрлĕ ĕçе,
Эп пулмарăм — вилетĕр кĕçех..."
Хар çех илнĕ ăна ыттисем:
— "Ай, ай, ай! Мĕн калать çак кĕсел!
Намăс çук мĕн, чăнах, ăссăрта!

Ĕçчен йыш вилес çук сансăр та
Ах, ытла та пӳкле сăмаху:
Пĕччен пуçăн тĕп пулăн эс ху!"
Яш Кăткай кăкăрне шаккаса
Хирĕçле сăмахлать тарăхса:
— "Эпĕ-и? Эп пĕччен, йышсăрах
Ĕç ăнтарăп çĕр хут ытларах!"
Çакнашкал калаçу хыçĕнчен
Уйрăлать çак айван çемйинчен.
Уйрăлать те хăй, чи малтан,
Çурт тума шухăшлать вăрманта.
Пĕччен пуçăн хуралт çавăрма,
Ма тесен, асап, çăмăл мар.
Çурт тăвас тăк, ĕç питĕ нумай.
Ĕç тесен вутра çуннă Кăткай,
Ĕçлеме вăл нихçан ӳркенмен,
Вăй-халне, сывлăхне хĕрхенмен.
Шухăш çук ун хĕне парăнма —
Пуçăнать çĕнĕ çурт çавăрма.
Вăй хурса, тар тăкса тăрмашать:
Çулçăсем, туратсем пуçтарать,
Анчах ĕçĕ Кăткайăн ӳсмест,
Ӳсме мар, вырăнтан та сикмест.
Кăткай-тус айкашать кун каçа:
Шыв кӳрет, тăм йăтать, тăм çăрать, —
Хăвăртрах вăл пуласшăн хуçа,
Намăса юласран та хăрать.
Кăткă-тус çĕрĕн-кунĕн ĕçлет:
Савалать, ыралать, çĕр чавать.
Пурпĕрех ĕç пырать хирĕçле,
Тепĕр чух кутăнла та чакать.
Инкеке, улшăнаççĕ кунсем:

Çу иртет, кĕркунне çывхарать.
Хăш-пĕр чух вăл сурать çиленсе,
Хăш-пĕр чух тарăхса та пăхать.
Ĕç нумай та ыр вăхăт кĕске:
Пит хуллен çĕкленет тĕмеске,
Пит хуллен çаврăнать çĕнĕ çурт, —
Пĕччен алă йыша çитес çук.
Кун иртет, çĕр иртет. Ерипен
Çĕкленет хăлтăр-халтăр кермен.
Савăнас вăхăтсем çитнĕ чух,
Йывăр ĕç вĕçленсе пынă чух
Пăтăрмах сиксе тухнă кĕçех:
Çивитти тăрлама пикенсен
Пăрлă çумăр пăсать пур ĕçе —
Кăткă çурчĕ ванать исленсе.
Ах, инкек! Мĕн тăвас пулать халь?
Кам-ха кĕтнĕ кун пек хурлăха?!
Çук! Кăткай парăнмасть пурпĕрех,
Вăл ĕçе пикенет çĕнĕрен:
Çухатса ыйхине-канăçне
Вирлĕрех пикенет çурт ĕçне.
Çурт ĕçне çĕнĕрен вăй хурать:
Тăм йăтать, хăр турат пуçтарать...
Кун иртет, çĕр иртет. Кĕр енне,
Тăрласа çитерет керменне.
Тĕмеске çех пулсан та кермен,
Хăй хуçишĕн вăл пурпĕр кервен.
Кăткай-тусăн халь пур ĕнтĕ çурт,
Çурчĕ пур та... çиме ним те çук.
Ĕç пирки вăл тухса çӳреймен,
Апат-çимĕç пухса кĕреймен,
Мулпа тулăх пулсан та вăрман

Хĕл валли вăл запас хурайман.
Мĕн тăвас? Çăмăл мар мĕскĕне!
Вăл кĕçех çĕн ĕçе пикенет:
Унта та кунта ыткăнать —
Аранах кăшт юр-вар пухăнать.
Мухтанма та ерçетĕ Кăткай:
— "Эп ăнтартăм ĕçе пит самай!"
Ун курас нушисем тата пулнă иккен,
Çапса хуçнă ăна çĕн инкек:
Сĕмсĕр нăрă пĕрре ир çинче
Ун çуртне тăрмалать те ватать.
Кăткай-тус пуç усать хальхинче —
Куççулĕпе çăвăнать çĕрхута.
Çараласçĕ кĕçех уй-хирсем,
Кĕрхи кун хĕл енне сулăнать:
Пуçланаççĕ хаяр сивĕсем,
Каçсерен ĕнтĕ шыв та шăнать.
Кăткай-тус чĕререн ӳкĕнсе,
Каялла çемйине таврăнать:
— "Йышăнсамăр мана тăвансем,
Каçарсамăр мана — айвана.
Ухмахлантăм эп ĕнтĕ текех,
Хама тытăп йышпа пĕр пекех".
Пурте кĕтнĕ çапла пуласса:
— "Пит аван ăса кĕтĕн пулсан!
Пысăк, аслă, таса пирĕн çурт,
Сан валли те унта вырăн пур".
Çĕнĕрен чун кĕрет Кăткая,
Ун йăли улшăнать самаях:
Каппайма пуçĕпех пăрахать,
Ĕçлесе ус тума çех пăхать.
Паян кун та вăл чыс-хисепре
Çак хастарлă, пĕр тан çемьере.

### III

Юплĕ-юплĕ сăмах — чун уççи,
Эпĕ пултăм ку чух ун хуçи.
Юмах ятăм сире юратса —
Чĕрери туййăма вăратса,
Юмах ятăм сире сăйласа —
Чи хитре сăмахсем суйласа.

## КАÇТАКИ

*Кулмăш*

Ах, ăстайлă Каçтаки,
Ăçта пур-ши сан пекки:
Ирпе ирех тăратăн,
Пăтă çакса яратăн —
Карчăкпала старике
Питĕ лайăх пăхатăн.

Пĕррехинче Каçтаки
Пит йўтетнĕ ват çынна:
— Яр-ха мана, Варвари,
Яр-ха мана вăрмана:
Кашкăр тытса килетĕп —
Сарă кĕрĕк çĕлетĕп.

Пирĕн ăсчах Каçтаки
Вăрманалла сулланать,
Вĕтлĕх вăрман хушшинче
Пĕр Куяна тĕл пулать.
Питĕ хăрать пулин те
Унпа сăмах пуçарать:

— Эсĕ сиксе çӳренскер,
Чурăс чĕрчун майлăскер,
Манăн вилĕм пулăн-ши,
Мана çисе ярăн-ши?

— Эпĕ санăн вилĕм мар,
Сана çиес чĕрчун мар.
Эпĕ — Куян пулатăп,
Çак таврара çӳретĕп —
Йывăç-курăк хуппине
Кăшла-кăшла çиетĕп.

Пирĕн ăсчах Каçтаки
Вăрманаллах сулăнать,
Сайра вăрман варринче
Сар Тилĕпе тĕл пулать.
Унпа сăмах пуçарать:
— Эсĕ меллĕн çӳренскер,
Чурăс чĕрчун майлăскер,
Манăн вилĕм пулăн-ши,
Мана çисе ярăн-ши?
— Эпĕ санăн вилĕм мар,
Сана çиес чĕрчун мар.
Эпĕ — сарă тирлĕскер,
Чее Тилĕ ятлăскер —
Шав çӳретĕп вăрманта,
Кĕтсе хамăн апата.

Пирĕн ăсчах Каçтаки
Малтан мала пăхкалать —
Хутăш вăрман варринче
Çичĕ кашкăр тĕл пулать
Çичĕ кашкăр хыçĕнче

Саккăрмĕшне вăл курать:
Ку — кавсăлса çитнĕскер,
Урăм-сурăм усалскер.
Хăрасан та Каçтаки
Унпа сăмах пуçарать:
Манăн вилĕм эс мар-ши,
Мана çисе ямăн-ши?

— Саншăн вилĕм пулатăп —
Сана çисе яратăп!

Кашкăр çапла калать те
Каçтакине тапăнать —
Асав шăлпа хĕстерсе
Урăм-сурăм тăрмалать.

Пирĕн ăсчах Каçтакин
Сапаланать шăм-шакки:
Унта-кунта купташки,
Унта-кунта мăйраки.

## КАÇ КИЛСЕССĔН

*Кулмăш*

Каç килсессĕн катаран
Кукша кĕвĕ пуçарать,
Кукша кĕвĕ каласан
Каçхи камит пуçланать.

Курак йăмра тăрринчен
Кулкаласа пăхкалать, —

Кушак сӗтел хушшинче
Кукарпала чыхӑнать.

Такапала сурӑхсем
Такмак-сӑвӑ сӳтеҫҫӗ
Такмакланӑ сӑмахсем
Таҫта ҫити вӗҫеҫҫӗ.

Ташӑ кӗвви тенӗрен
Тӗрлӗ кайӑк пухӑнать, —
Тарӑн варти Талпиҫен
Тапӑртатса ухӑнать.

Тарса ҫӳрен Таракан
Тӑрӑс-тӑрӑс сиккелет,
Тунсӑхланӑ Тунката
Тӳнкки-тӳнкки кӗвӗлет.

Чӗвӗл-чӗвӗл Чӗкеҫсем
Чӗвен тӑрса вӗҫеҫҫӗ, —
Чӗрӗ йӗплӗ Чӗрӗпсем
Чӗн тилхепе сӳтеҫҫӗ.

Шӑркасемпе Шӑрчӑксем
Шӑтӑксенчен тухаҫҫӗ, —
Шӑпӑр тытнӑ Шӑпчӑксем
Шӑрантарса юрлаҫҫӗ.

Явап-явап тенӗрен
Явап пирки ӗҫ тӑмасть:
Ялан яту ҫӳресен
Ял халӑхӗ ятламасть.

Ял хавалĕ халăхра,
Ял уявра савăнать:
Ян-ян вăйă-кулăра
Яшши-ватти хал пухать.

## КАЙРĂМĂР

*Вăйă*

Кайрăмăр, кайрăмăр —
Каçă тĕлне антăмăр,
Каçă урлă каçрăмăр —
Малалла уттартăмăр.

Кайрăмăр, кайрăмăр —
Ката тĕлне тухрăмăр,
Ката урлă каçрăмăр —
Малалла хускалтăмăр.

Кайрăмăр, кайрăмăр —
Кӳлĕ тĕлне тухрăмăр,
Кӳлĕ урлă каçрăмăр —
Малалла чавтартăмăр.

Кайрăмăр, кайрăмăр —
Карта тĕлне тухрăмăр,
Карта урлă каçрăмăр —
Киле çитсе тăтăмăр.

## КĂМПАСЕМ

Сар хĕвел савса пăхсассăн,
Шурă юр юхса кайсан,
Сар чечек шăтса тухсассăн
Çутçанталăк пит аван.

Кайăксем хĕрсе юрлаççĕ,
Тумланаççĕ йывăççем,
Курăксем кашма сараççĕ,
Вăранаççĕ кăмпасем.

— Кăмпа çумăрĕ ку, — теççĕ
Ăшă çумăр çунă чух,
Кăмпа кунĕсем çитеççĕ —
Ӳркенмесĕр пух та пух.

Авалтан кăмпа татаççĕ
Ватăсем те вĕтĕсем,
Ахаль мар ăна мухтаççĕ
"Вăрман çăкăрĕ" тесе.

Кăмăл çимĕçĕ кăмпа вăл,
Тунсăх çимĕçĕ тата.
Вăл ӳссе çитсн ытлах та
Сунчăк евĕрлĕ сăнпа.

Тĕрлĕрен, паллах, пулаççĕ
Кăпка ӳтлĕ кăмпасем:
Пĕрисем çиме юраççĕ,
Хăстараççĕ теприсем.

Пытанса пекех лараççĕ
Çимелли ыр кăмпасем,
Тунисем çинçе пулаççĕ
Тухатма çуралнисем.

Пĕр кăмпа ытла та капăр,
Ун чăпар калпакĕ пур.
Ачасем, ăна ан татаăр!
Ку сиенлĕ — "Шăнамур".

## КУККУК
*Юмах*

Авал тенĕ кунсенче,
Асран тухнă çулсенче
Пулса иртнĕ ĕç çинчен
Çырас терĕм хут çинче.
Пĕррехинче-пĕринче,
Пĕр илемлĕ йр çинче
Чакак вĕçсе чаклатса,
Чалак хыпар салатса:
— Ах, кайăксем-кĕшĕксем,
Капăр тумлă пĕлĕшсем,
Ман çывăха килĕрсем,
Ман сăмаха итлĕрсем:
Хура вăрман варринче,
Хура юпа айĕнче,
Пуçтаха суд пулмалла —
Пурте унта пымалла!
Çак хавхана илтсенех,

Хавха пуҫа витсенех,
Пуҫтарӑннӑ кайӑксем —
Вӗҫме хӑват пуррисем.
Пур кайӑк та пухӑнсан,
Пурте вырӑн йышӑнсан,
Сӑмах илнӗ ват Кӑрак —
Сӗм вӑрманти ыр кайӑк:
— Ҫак таврари кайӑксем —
Ҫамрӑккисем, ваттисем,
Паян пирӗн ҫакӑнта, —
Пархатарлӑ вырӑнта,
Суд тумалла Куккука —
Сумран тухнӑ кайӑка.
Куратӑр пуль хӑвӑр та:
Куккук сирӗн умӑрта.
Куккук пӗтӗм чӑнлӑха
Пӗлтерсемччӗ халӑха:
Мӗншӗн йӗрке пӑсатӑн —
Мӗншӗн йӑва тумастӑн?
Мӗншӗн йыш пек пулмастӑн —
Ачусене пӑхмастӑн?
Пӗр суймасӑр халӑха
Пӗлтер пӗтӗм чӑнлӑха.
Чӑпар куккук хумханса
Тӑват енне пуҫ таять,
Тӑват енне пуҫ тайса
Хуллен кӑна хуравлать:
— Ма пуҫланчӗ йыш ҫинче
Ман пирки ҫак калаҫу? —
Вӑрман йышӗ умӗнче
Ман нимле те айӑп ҫук.
Эп ҫемьесӗр пурӑнни
Манран килен айӑп мар, —

Çутçанталăк хуçине
Ма-ха уншăн айăплар?
Кайăк-кĕшĕк хушшинче
Эп телейсĕр ытла та:
Çуркуннехи кунсенче
Тăвас килет йăва та.
Эп çуркунне пулсанах
Пĕр çăмарта тăватăп,
Малтанхи чĕп тухсанах
Çĕн çăмарта тăватăп.
Ĕçсем пырсан çаплалла
Ĕнтĕ мĕскер тумалла:
Те йăвара лармалла,
Те аш йăтма каймалла?
Ăслай тупма çук енне
Ăсран тухса çунатăп:
Ют кайăксен йăвине
Çăмартасем хуратăп.
Чун хурланса килнипе
Эп вĕçетĕп кук! тесе,
Савăнмашкăн чĕпсемпе
Пуçра телей çук! тесе.
Курнă пулĕ хăвăр та
Эп тунсăха путнине,
Курас нуша йывăртан
Вĕри куççуль тăкнине.
Куккук çапла калать те
Пуçне усса шăпланать.
Улатакка тăрать те
Тепре ăна тустарать:
— Куккук пĕлет калаçма,
Унăн чĕлхи пыл та çу, —
Çапах ăна каçарма

Суд умĕнче сăлтав çук!
Чунсăр ĕçчен чурине
Халь кирлĕ пек айăплас,
Хура юпа тăррине
Хурлăх курма пăталас!
Улатакка хыçĕнчен
Улатăпа çĕкленет,
Вăл кукукка ĕç енчен
Хӳтĕлеме пикенет:
— Хура вăрман кайăкне
Хурлăхпала хупличчен,
Таса куçпа ун çине
Пăхса илер пур енчен.
Эпир пурте, тăвансем,
Юрататпăр вăрмана,
Анчах ĕнтĕ тĕкшесем
Тапăнаççĕ яланах.
Чăпар Кукук çулсерен
Тĕкшесене тустарать —
Чи сиенлĕ хуртсене
Пĕсехине тултарать.
Тĕкше çиен кайăксем
Сĕм вăрманта урăх çук,
Çавăнпа та кукуксем
Питĕ усăллă ку чух.
Улатапа сăмахне
Пурте пуçа хываççĕ,
Капăр Кукук уссине
Çĕнĕ куçпа пăхаççĕ.
Капăр Кукук пуç тайса
Кайăксене тав тăвать —
Ыр ĕçпеле тавăрать.

## КУШАКПА ШĂШИ

*Юмах*

Ир енне тĕл пулнă
Кушакпа Шăши:
Кушак ăшшăн кулнă —
Савăннă Шăши.

— Тусăм пул-ха, — тенĕ
Кушака Шăши.
Кушакки итленĕ:
— Пулăп чун ăшши.

Çакă туслăх пулнă
Çулăм пек "вĕри" —
Шăши тусран юлнă
Шĕвĕркке хӳри.

Сăмаха вĕçлерĕм —
Пĕтрĕ ман юмах:
Мĕн çинчен систертĕм
Туйăр хăвăрах.



## КУЛЯНУ

*Куляну юрри*

Кайри ура вăрăм,
Малтисем кĕске, —
Çавăнпа та тăрăм
Питĕ йывăр-çке.

*Хушмав:*
Питĕ, питĕ, питĕ,
Питĕ йывăр-çке.

Мăшăр хăлха вăрăм,
Чармак куç черкке, —
Çавăнпа та тăрăм
Питĕ йывăр-çке.

*Хушмав.*

Пурнăç çулĕ вăрăм,
Кунăмсем кĕске, —
Çавăнпа та тăрăм
Питĕ йывăр-çке.

*Хушмав.*

Хам йăваш та ырă,
Тăшмансем тискер, —
Çавăнпа та тăрăм
Питĕ йывăр-çке.

*Хушмав.*

# КĂНТĂРЧИ

Кантăка ирех уçатăп —
Кантăр кайăкне куратăп:
— Капăр кайăк — Кăнтăрчи,
Кала, эсĕ кам ачи.

Капăр кайăк Кăнтăрчи
Калаçма пуçлать: — чи-чи,
Кам-ха эпĕ? — Кăнтăрчи!
Кантăрпа пуса ачи.

Юрататăп Пусана,
Юрататăп Кантăра, —
Кантăрпала пуса пек
Юрататăп Кăнтăра.

Юрататăп хурлама,
Юрататăп ырлама,
Пуринчен те ытларах
Юрататăп юрлама.

Юрататаăп ăнăçа,
Юрататăп тухăçа, —
Пуринчен те ытларах
Юрататăп пурнăçа.

Кун кунлама кун кирлĕ,
Çĕр çĕрлеме çĕр кирлĕ,
Кунпа çĕре ирттерме
Кулса тăран чун кирлĕ.

## КАМПУРПА ХУР

*Калаçу*

Уçăлма тухсассăн Хур
Курах кайнă Кампура:
— Мĕнлерех пурнан, Кампур,
Мĕн шыратăн урамра?

Хăрлатса илет Кампур:
— Умран сирĕл, шурă хур,
Эс мана йăваш ан кур —
Ман усаллăх та кăшт пур!

## КРОКОДИЛ

*Кулмăш*

Ăшă енчи сивĕ çил
Вар тĕпне пытаннă.
Нил хĕрринче Крокодил
Ним тумасăр ларнă.

Ним тумасăр ларасси
Питĕ йăлăхтарнă:
Тунсăхне сирес тесе
Çăварне вăл карнă.

Карнă çех вăл çăварне —
Çиес килсе кайнă:
Вара хăйĕн мĕлкине
Хыпса-çăтса янă.

## КАШКĂРПА КУЯН

*юмах*

Пĕр илемлĕ ир çинче,
Тĕнчĕк варĕ тĕлĕнче,
Кашкăр курнă Куяна:
— Ну, тăхта — курам сана!

Чарăнса тăрать Куян,
Кăрт! тапса илет чĕри, —
Йывăр кун пулас паян,
Сывлăш та ытла вĕри...

Кашма пуçлă Кашаман
Кăшкăрма пуçлать тӳрех:
— Шӳт тума шут çуккă ман,
Ман çиес килет ирех!..

Пуç тайса калать Куян:
— Итлесемччĕ эс мана,
Паян эпĕ пит пуян —
Ман пур виçĕ тăмана...

Кашкăр питĕ тĕлĕнет —
Сĕлехи юхать кăна:
— Куян тусăм, эсĕ, — тет, —
Мана пар эппин ăна.

Куян тус пуçне усать —
Кăшт куляннă пек пулать.
Кашта пӳллĕ Кашкăра
Çапларах калать вара:

Тĕкне татнă Тăмана
Хама та пит кирлĕ те...
Парасах пуль çав сана,
Кирлĕ пулăн эсĕ те.

Кашкăр чунĕ Кашкăрах,
Вăл тĕпче пуçлать тӳрех:
— Тăману сан ăçтарах —
Пĕлтерсемччĕ тĕплĕрех?

— Ăçта пултăр — вăрманта,
Кĕçĕн улăх тĕлĕнче,
Унта пур пĕр тунката,
Тăмана ун тĕпĕнче.

Выçă куçлă Кашаман
Кулнă евĕр елпĕрет:
— Эс вăт çывăх тусăм ман,
Асра пулăн-ха эс, — тет.

Уйрăлас чухне хуллен
Кашкăра калать Куян:
— Кам та кам çакна пĕлсен,
Эс апатсăрах юлан...

Кашкăр урăх итлеме
Шутламан та темелле —
Вăл вĕçтернĕ аш çиме
Кĕçĕн улăх еннелле.

Улăха çитейнĕ те
Унăн-кунăн пăхкалать:

Лапамрах кăна тĕлте
Тунката лара парать.

Кашкăр тусăн сĕлехи
Тепĕр хут юхса анать:
— Асран тухтăр ĕнерхи —
Паян хырăм савăнать!

Катăк ăслă Кашаман
Çĕмĕрет тункатана:
Ăшĕнче ларать Ăман...
Çук та виçĕ Тăмана!

Тарăхса каять хайхи —
Шăхăра пуçлать: ши-ши! —
Итлекен чĕрчун хăлхи
Еплерех тӳсейрĕ-ши?

Ахăрсан та, макăрсан та
Куççульрен пулмарĕ çу —
Айăпли пулас пулсан та
Халь ăна тытма май çук.

Сехет çурă ахăрсан
Лăпланать вăл хулленех, —
Усал чунĕ лăш пулсан
Ăсанать çăва патнех.

Çăвана çитсе тухсан
Çăварне карса çӳрет,
Çавра шăмă кăшласа
Çиеслĕхне ирттерет.

Вара пĕчĕк вар тĕпне
Йăпшăнса кĕрсе ларать,
Манса пĕтĕм инкекне
Пĕр кана вăл çывăрать.

Кашаман çак Куяна
Тепĕр кун курать каллех, —
Хăлхинчен тытса ăна
Çиме хатĕр чĕрĕллех:

— Улталарăн эс мана,
Чĕркуçленнĕ пул халех!..
Шиклĕ чун чĕтрет кăна:
— Пĕтрĕм пулĕ, — тет, — тинех.

Хуть те çурăл, хуть те çун, —
Хăтăлмашкăн майĕ çук.
Мĕн-ха ĕнтĕ тумалла,
Епле чĕррĕн юлмалла?

Сăнлăхран кайсан Куян
Сăмахне пуçлать хуллен:
— Чипер пул-ха манпалан,
Ăнланмасăр ан çилен.

Ахăрать çех Кашаман —
Калаçма та май памасть,
Куян тусăн сăмахне
Итлеме те шутламасть.

— Ха! Кулма пăхать тата,
Çĕрĕк пуçлă çăпата! —

Эп кăтартăп-ха сана
Çичĕ аршăнлă сăнна!..

Куян тус пуçне тайса
Тепĕр хут салам парать:
Хăйне майлă юптарса
Хăтăлма сăлтав шырать:

— Эй, хисеплĕ Кашаман,
Эп суймашкăн çуралман;
Эс ху пултăн тăмана —
Итлемерĕн вĕт мана.

— Ха, тата мĕн калаçать,
Кур-ха шĕпĕн çăварне,
Çĕрĕк чун, каллех уçать
Мана хирĕç çăварне!..

Куян тус пуçне таять
Пытарасшăн куллине,
Çапларах вара калать
Кайтăкланнă тăшманне:

Уйрăлас чухне хуллен
Каларăм вĕт систерсе:
"Кам та кам çакна пĕлсен
Эс выçах юлан", — тесе.

Кашкăр тусăн çийĕнчех
Шалти туйăм улшăнать —
Çавăнпа вăл ун çинчен
Калаçма та тытăнать:

— Куян тусӑм кала-ха,
Павramasӑр ытлашши:
Ун чухне вӑрттӑнлӑха
Кам илтме пултарнӑ-ши?

— Кашкӑр тусӑм, ун ҫинчен
Ман санран ыйтма юрать:
Кам тунката ӑшӗнче
Пулнине чухлас пулать.

— Ха! Ҫав ҫӗрӗк ӑшӗнче
Кам-ха пултӑр, тӑмана!
Э, чим, ҫӳпӗ айӗнче
Куртӑм пӗчӗк Ӑмана.

Ак каллех урса каять
Кашма ҫӳҫлӗ Кашаман,
Ак каллех вӑл тытӑнать
Айӗн-ҫийӗн кӑтӑрма:

— Ха! — тет Кашкӑр Куяна, —
Мӗн калать ҫав инкемек!
Ёненместӗп эп сана,
Улталаймӑн эсӗ тек!..

— Ҫук, ҫук ёнтӗ, апла мар, —
Ҫӑвӑнса калать Куян, —
Ултавпа эп туслӑ мар,
Сан умра епле суян!?

Е чӑнах суяс пулсан,
Эс мана часах тытан:

Суйнипе, хăвах пĕлен,
Сумлăхран тухса ӳкен.

Хăтăлма çех вилĕмрен
Суйкаланă теплерен,
Кив йăлапа пурăнма
Халь вĕт кивĕ пурнăç мар.

Чăр пăхса Куян çине,
Урнă пек çине-çине
Кăнтарса мăн чышкипе
Кăшкăрать леш çилĕпе:

— Ан тăс хаклă вăхăта,
Хăвăртрах кала, ăнман! —
Эп çиес ыр апата
Епле çинĕ-ха Ăман?!

— Ан васка пит, Кашаман,
Эпĕ мар, эс ху ăнлан:
Куç пăвса кăна Ăман
Пĕчĕкленнĕ вĕт, ăнлан!!!

Кашма çӳçлĕ Кашаман
Каллех хатĕр кăтăрма:
— А-а, ун пек иккен Ăман,
Паянтан вăл ман тăшман!...

Кашкăр кăтăрнă чухне
Куян тус мĕскер тăвать? —
Хăтарса хавшак чунне
Вĕтлĕхе часрах шăвать.

## КУЛЯНУ

*Пулмăш*

Ака пĕтсен, пĕринче —
Пĕр илемлĕ ир çинче,
Пырса тухрăм катана —
Курах кайрăм Куяна.

Куян ларать кулянса,
Туйи çине таянса:
— Мана пўрмен ăнăçу,
Ман пачах та телей çук...

Алă патăм Куяна —
Кĕске ăслă айвана:
— Куян, тусăм, кала-ха,
Ма йĕретĕн кăлăхах?

— Шурă кĕрĕк пурччĕ ман,
Эп çухатрăм çав тума:
Халь вара ман мĕн тăвас —
Хĕлле мĕскер кăптанас?*

— Ах, тăванăм Куянкка,
Ытлашши ан кулян-ха:
Халь çу кунĕ — сивĕ мар,
Шурă кĕрĕк кирлех мар.
Хĕл çитсессĕн — юр çусан,
Шур тум татах пулĕ сан.

Катăк тута Куянкка
Тин пăрахнă кулянма.

## КУКУРУЗĂ

Пĕррехинче-пĕринче
Пĕр илемлĕ ир çинче,
Нăрă тухнă çул çине —
Курнă пĕчĕк мĕлкине.
Вĕсем иккĕш кударах
Сăмахланă çапларах:

— Сăмахла-ха манпалан,
Эй, тăванăм, кам пулан?
— Эп пулатăп Кукуруз,
Эс пулсамччĕ манăн тус!
Халлĕхе эс ача-ха,
Ăнланаймăн туслăха.

Тепрехинче-тепринче,
Тепĕр çутă ир çинче,
Каллех Нăрă çул çинче —
Вăрăмкка ун умĕнче.
Вĕсем иккĕш кударах
Сăмахланă çапларах:

— Сăмахла-ха манпалан,
Эй, тăванăм, кам пулан?
— Эп пулатăп Кукуруз,
Эс пулсамччĕ манăн тус!
— Халь вара эс вăрăмскер,
Туслăхран та çӳллĕскер.

## КУКШАПУҪ

Ман умра ешӗл улăх,
Пӗр вӗҫӗмсӗр инҫет.
Чечек ҫыххи ятулăх
Пухса ҫӳрес килет.

Ав кур — ҫамка чечекӗ,
Ав кур — ыраш пукри,
Ав леш епле черченкӗ,
Ав лешӗ — чи хитри.

Ак ку ҫавра калпаклă,
Шап-шурă пӗчӗк шар:
Вӗрес пулсан вăл, паллă,
Вăррине сапать чăл-пар.

Юлать тăпки вара
Калапаксăр, ҫарапуҫ.
Тен, ҫавăнпа-и Чăвашра
Ун ячӗ — Кукшапуҫ.

## КУККУК

Вăрманта пӗр кайăк
Лап турат ҫинче.
Ăсатать тавралăх
Сассине инҫе:
— Ку-кук! Ку-кук!

Вăрмана килеççĕ
Вăйпитти çынсем,
Çул шутне тĕпчеççĕ
Куккукран вĕсем:
— Ку-кук! Ку-кук!

Вăрманта вĕçеççĕ
Тĕрлĕ сĕрлĕхсем,
Киленсе итлеççĕ
Куккука вĕсем:
— Ку-кук! Ку-кук!

Вăрманта ўсеççĕ
Тĕрлĕ чечексем,
Тĕлĕнсе итлеççĕ
Куккука вĕсем:
— Ку-кук! Ку-кук!

Вăрмана килеççĕ
Çамрăк ачасем,
Çĕнĕлĕх сĕнеççĕ
Куккука вĕсем:
— Ку-кук! Ку-кук!



## КУЛМĂШ

*Шӳтлĕ юмах*

Пĕринче,
Пĕр хĕвеллĕ ир çинче,
Пырса кĕтĕм вăрмана —
Ыр сунмарĕ вăл мана.

Ах, анчах,
Инçетре мар — çывăхрах,
Сасă пулчĕ чăштăр-чăштăр —
Сикрĕ тухрĕ сарă Кашкăр.

— Эп паян
Выçă, — терĕ Кашаман, —
Çавăнпа та ан тавлаш,
Пурпĕрех пулатăн аш!

Кашкăра
Эп каларăм пит кăра:
— Эй, усал,
Ман умран халех тасал!

Кашаман,
Пăхса илчĕ те куçран,
Сăмах хушрĕ пит хуллен:
— Мĕн тăван итлемесен?

Васкасах,
Кирлĕ сăмах суйласах
Çиленнине туйтарса
Хуравларăм юптарса:

Хусана
Илсе кайĕç те сана,
Хупса хурĕç читлĕхе, —
Читлĕхе — ĕмĕрлĕхе!

Кашаман
Самантарх çухалчĕ ман:
Чăштăр-чăштăр сас кăна
Кĕрсе юлчĕ хăлхана.

## КĂМĂЛЛАРĂМ

Анлă хире тухсанах
Куртăм уй-хир ăстине:
Ун куçĕнчен пăхсанах
Туйрăм телей ăçтине.

Уй-хир ăсти çамрăк çын
Ĕçне тăвать тĕплесе —
Тĕл пулсан хисеплĕ çын
Ма пăхать-ши темлесе?

Тарăн-тарăн авăр пек
Унăн чакăр куçĕсем:
Вăл мухтавлă ĕçĕпе,
Ĕçпе туслă аллисем.

Вăл сăваплă хуçа пек
Çĕр-питне сиплет ĕçпе, —
Сăмахĕпе-чĕлхипе
Чун-чĕрене кĕрес пек.

Чун-чĕрене кĕрес пек,
Унта йӑва хывас пек:
Эп ҫав пурнӑҫ ҫыннипе
Кĕтнине кĕҫ тупас пек.

Анлӑ хире тухсанах
Кӑмӑлларӑм эп ӑна:
Манаймастӑп ҫав сӑна —
Ман куҫра ҫав сӑн кӑна.

## МИККИ КУЛАЙĔ
*Юмах*

Ак — Микки Кулайĕ,
Акӑ ун кун-ҫулĕ:
Йывӑр пулнӑ пайĕ —
Вӑл тӑкман куҫҫулĕ.

Ҫак Кулай асамҫӑн
Кӑмӑлĕ пит уҫӑ:
Вӑл паян — хыпарҫӑ,
...... — юмахҫӑ.

Ачаран вӑл кулнӑ,
Кулӑша тус тунӑ:
Йĕрес чух йӑл кулнӑ —
Ҫӳремен салхуллӑ.

Кӑмӑл ҫук пулсан та —
Кулӑшпах вӑл супнӑ,
Хурлӑх хупласан та —
Хӑтӑлма ҫул тупнӑ.

Шыв айне путсассăн —
Пулма пĕлнĕ Пулă.
Шыв ҫине тухсассăн —
Пулма пĕлнĕ Сулă.

Ҫĕр ҫине ӳксессĕн
Пулма пĕлнĕ Тулă,
Вăрмана кĕрсессĕн
Пулма пĕлнĕ Хулă.

Ҫавăнпах чĕр хулă
Чĕрĕлме пултарнă:
Чун кĕрсессĕн, кулă
Хайлатса култарнă.

Ак — Микки Кулайĕ,
Акă ун сăнарĕ:
Тĕл пулсан — пуҫ тайĕ,
Шӳт туса култарĕ.

Вăл йыша култарĕ —
Хăй те ăшшăн кулĕ,
Чун-чĕре кăварĕ
Ун хăватлă пулĕ.

Вăл манпа та кулĕ,
Сирĕнпе те кулĕ, —
Вăл паян та пулĕ,
Малашне те пулĕ.

## МЫСКАРА

*Юмах*

Старик килнĕ пасартан,
Карчăк тухнă хапхаран.
— Мулпа кайрăн пасара,
Мĕнпе килтĕн каялла?!
— Енчĕк тулли тупăшпа
Эп туянтăм тур лаша.
— Ах, мыскара-мыскара,
Лашу ăçта сан вара?!
— Эп çавăнтах лашана
Улăштартăм ашакпа.
— Ах, мыскара-мыскара,
Ашаку ăçта вара?!
— Эп çийĕнчех ашака
Улăштартăм ашăкпа.
— Ах, мыскара-мыскара,
Ашăку ăçта вара?!
—Эп çав хутрах ашăка
Улăштартăм Чашăкпа.
— Ах, мыскара-мыскара,
Чашăку ăçта вара?!
— Эп çавăтах Чашăка
Улăштартăм Кашăкпа.
— Ах, мыскара-мыскара,
Кашăку ăçта вара?!
— Эп çавăтах Кашăка
Улăштртăм ташăпа.
— Ах, мыскара-мыскара,
Сан ташшу ăçта вара?!!
— Манăн ташă çухалман
Матка тух-ха ташлама.

# МĂЙПĂРАН

*Юмах*

Ар пулсан, пĕрре,
Кĕçĕн сивĕре,
Кайрăм вăрмана —
Куртăм тăмана,
Тăмана хайхи
Пулчĕ пек Хĕрхи,
Хĕрхи тенĕскер
Пулчĕ тĕклĕскер,
Тĕклĕ япала
Пулчĕ сăмала,
Сăмаларан —
Сăхă Мăйпăран.
Ыйтрăм эп унран —
Тĕклĕ тусăмран:
— Каласамччĕ, Мăйпăран,
Мĕншĕн эсĕ мăй пăран?
Кăштахран
Ак мĕн терĕ Мăйпăран:
— Эпĕ мăй пăрса кăна
Хăрататăп тăшмана:
Мăя меллĕ пăрнипе
Эп пулатăп çĕлен пек.
Ара ĕнтĕ, ĕлĕкрен
Кашни хăрать Çĕленрен...
Вĕçсе кайрĕ Мăйпăран —
Юмахăм та пĕтрĕ ман.

## МĔНЛЕ ТЫТАÇÇĔ

Аватана тытаççĕ пĕрчĕпе,
Ăйăра тытаççĕ йĕвенпе,
Ăнтăра тытаççĕ меслетпе,
Вăкăра тытаççĕ вĕренпе,
Йăмрана тытаççĕ йăлмакпа,
Кайăка тытаççĕ капкăнпа,
Лĕпĕше тытаççĕ сыркăшпа,
Мулача тытаççĕ майкăçпа,
Пăлана тытаççĕ карлăхпа,
Пăшие тытаççĕ пăшалпа,
Сăсăра тытаççĕ сăлайпа,
Çерçие тытаççĕ хывăхпа,
Уйăпа тытаççĕ лапăпа,
Чĕпсене тытаççĕ çатанпа,
Шăшие тытаççĕ тапăпа...

Халь çакна пĕлтер мана:
Мĕнпе тытаççĕ айвана?

## ПУЛМĂШ

Авалхи кунсенче
Иртсе кайнă çулсенче,
Хал çитсессĕн, кĕркунне,
Юханшывсем çуннă, тет.

Çулăм хыпнă шывсене
Услам çупа сапнă тет.

Услам ҫупа сапсассăн
Юханшывсем сÿннĕ тет.

Юханшыври пулăсем
Питĕ лайăх пиҫнĕ тет:
Ухмах Иван вĕсене
Пуха-пуха ҫинĕ тет.

## ПУЛĂШ-ПИЧЧЕ

*Юмах*

Пулнă пирĕн чăвашсен —
Пулхăр енчи тăвансен
Пултаруллă пĕр пичче —
Пулăш паран ыр пичче.

Чăваш ҫынни яланах,
Чăрмав сиксе тухсанах,
Чĕнсе илнĕ хăй патне
Чăн хисеплĕ пиччĕшне:

— Пулăш-пичче, пулăшах,
Ан хăварсам кулăша, —
Юлас пулсан кулăша
Кун пулас ҫук чăваша.

Пулăш-пичче пынă та,
Унăн-кунăн пăхнă та,
Йĕри-тавра куҫланă,
Вара сăмах пуҫланă:

— Ĕç ăнтарма хăвăртрах
Тăрăшмалла хăвăн та,
Часрах сирме чăрмава
Вылятмалла тăнлава.

Вара Чăваш тусĕпе —
Ватă Пулăш пиччепе
Ваштах çине тăнă та
Чăрмавлăхран тухнă та.

Пурнăç пусать пĕччене,
Ирĕклĕрех иккĕне,
Йывăр чухне ĕмĕрне
Чĕн эс Пулăш-пиччене.

Пулăш-пичче аванскер,
Пур çынна та саванскер,
Пур çĕре те çитенскер,
Пулăш парса çӳренскер.

Пуç çитмесен ытах та
Пултаратăр ыйтма та:
— Пĕлес килни пур ара,
Пулăш пичче кам вара?

Пулăш пичче вăл ара
Кам-ха пултăр! Ху вара!
Пулăшмасан хăвна ху
Пуç сăхаймĕ ырлăху.

## ПĂРИ ПĂТТИ

*Пулмăш*

Пĕчĕкçеççĕ Путене
Пăри пăтти пĕçерет,
Пĕлен-тăран кăшсене
Пĕрер пĕрчĕн çитерет.
Акăш вĕçсе пырать те:
— Акăш-макăш тутлă! — тет.
Ăсан вĕçсе пырать те:
— Ăсран кайса çийĕн! — тет.
Вĕршĕн вĕçсе пырать те:
— Витĕр лайăх пиçнĕ! — тет.
Йăскар вĕçсе пырать те:
— Йăлăхтарми лайăх! — тет.
Курак вĕçсе пырать те:
— Кун пек çимĕç курман! — тет.
Пăчăр вĕçсе пырать те:
— Пылпа çу пек тутлă! — тет.
Çăхан вĕçсе пырать те:
— Çăмахран та лайăх! — тет.
Тăри вĕçсе пырать те:
— Тăнран тухса çийĕн! — тет.
Ÿхĕ вĕçсе пырать те:
— Ÿлĕм татах пĕçер! — тет.
Хăлат вĕçсе пырать те:
— Хăтлă пиçнĕ çимĕç! — тет.
Чĕкеç вĕçсе пырать те:
— Чĕлхе çăтса ярăн! — тет.
Шулли вĕçсе пырать те:
— Шутсăр тутлă пиçнĕ! — тет.
Ял ĕçченĕ пĕлтерет:
— Ялта çук çав пăри! — тет.

## ПИҪЕНПЕ ХĔРЕН

Пĕр илемлĕ ир ҫинче
Хĕрен ыйтнă кӳршинчен:
— Каласа парсам, пиҫен,
Хĕвел ҫинче ма пиҫен?

Пиҫĕн хăйĕн кӳршине
Пĕлтерет тĕп сăлтавне:
— Хĕвелпе пиҫе-пиҫе
Эп пулатăп та пиҫен!

Калаҫсан ун-кун ҫинчен
Пиҫен ыйтнă кӳршинчен:
— Каласа парсам, Хĕрен,
Хĕвел ҫинче ма хĕрен?

Хĕрен хăйĕн кӳршине
Пĕлтерет тĕп сăлтавне:
— Хĕвелпе хĕре-хĕре
Эп пулатăп та Хĕрен!

## ПУРĂШПА ТИЛĔ

*Юптару*

Пурăша каланă Тилĕ:
— Питĕ япăх килĕм,
Ҫавăнпа та Пурăш
Ҫурт ҫавăрма пулăш.

Пулсассăн та кулăшла
Пурăш панă пулăшпа

Часах пулнӑ Тилӗ
Çуртлӑ-йӗрлӗ, киллӗ.

Мораль:
Çак çаврӑм хыççӑнах
Кирлӗ пӗчӗк хыççӑмах:
Çавӑн пек вӑл тепӗр чух
Сӑвӑнма пӗлни те чух!

## ПӐСАРА

*Шӳт*

Пӗррехинче,
Çурхи ӑшӑ кунсенче,
Атте кайрӗ пасара -
Илсе килчӗ пӑсара.

Çав тетте,
Тетте кӑна пулнин те,
Пит илемлӗн курӑнать,
Чӗрӗ пекех туйӑнать.

Теттене,
Атте илсе панине,
Йӑтса тухрӑм урама —
Çамрӑксене кӑтартма.

Тухсанах,
Ман теттене курсанах,
Сӑмахлаççӗ ман умра:
"Пӑс ара" та "пӑс ара"

Сĕмленсе,
Çын сăмахне итлесе,
Пăсарана тытрăм та
Туххăм пăсса хутăм та.

Урăхран
Пулмăп эпĕ те айван.
Арçук тусăм калашле,
Ăслă пулăп малашне.

## СЫХЛАВ

Анчăк тирĕк умĕнче
Ларать тетĕр мĕн туса? —
Анчăк тирĕк умĕнче
Ларать шăмă сыхласа.

Кушак шăтăк умĕнче
Ларать тетĕр мĕн туса? —
Кушак шăтăк умĕнче
Ларать шăши сыхласа.

Шăши ларать йăвинче
Ларать тетĕр мĕн туса? —
Шăши ларать йăвинче
Кушак тусран хăраса.

Мораль:
Мĕн каласси —
Мĕскĕн ĕçĕ хăрасси!

## РАК-ХĔСКЕВ

*Пуçлав*

Алăкран тухрăм —
Анаталла утрăм,
Тăвалла хăпартăм —
Ту тăррине лартăм,
Ту тăррине лартăм —
Сăмахсем суйларăм.
Ман сăмахăм хальхинче
Рак текен чĕр-чун çинчен.
Акă РАК —
Йăраланать ман умра:
Çăварĕнче шăрт,
Аллинче хĕскев.
Хĕскевĕ пит кĕске,
Рак хĕскевĕ кĕскерен
Юмахăм та ман кĕске:
Çавра юмах кĕскерен
Вăрăмлатăп эрнерен



## СЕРТЕ

*Ытарлăх*

Ар пĕрчисем — арçынсем,
Хĕр пĕрчисем — хĕрçынсем!
Ман ыйтас килет сиртен:
— Мĕнлерех ӳсет серте?

Ал çĕклерĕ ар пĕрчи —
Пуринчен те çивĕччи:
— Ыйтмалла чухне сиртен
Ма ыйтатăр-ха пиртен?

Ыйту пулсан вирелле —
Ответ пама пĕлмелле:
— Ыйтас килсен — ыйтмалла,
Ответлăха туймалла.

Ал çĕклерĕ ак тепри —
Йĕплемешкĕн хатĕрри:
— Сĕнсе калатăп-ха сире,
Тухса курсамăр уй-хире.

Ку ача мана йĕплет —
Явап тытмашкăн тӳр килет:
— Пулкалатăп уй-хирте,
Анчах ӳсмест унта серте.

Ал çĕклерĕ хĕр пĕрчи —
Çавра сăмах евĕчи:
— Серте мĕнле ӳсет сирте
Çаплах ӳсет серте пирте.

— Хуравлатăп чиперех —
Ят-çĕршыв сан мĕнлерех?
— Çуралнă эпĕ Сĕнтĕрте,
Ят-çĕршывĕ ман Серте.

— Ав мĕнлерех ӳсет Серте,
Ăнлантăр-и çавна пурте?
Ăнланман пулсан сире
Аван мар пулать сĕре!



## САРĂ КАЙĂК

Сарă-сарă сарăскер
Сарă кайăк пулать вăл,
Сарă кайăк тенĕскер
Сумлă хăна пулать вăл.

Сарă кайăк туратран
Сарă сăпка кăкарать, —
Сĕмсĕр хурах курасран
Сар тĕкпеле хупăрлать.

Сарă сăпка хĕррине
Сарă кайăк хăй ларать,
Савăнтарма чĕппине
Сăпка юрри пуçарать.

— Сар хĕвеллĕ улăхра
Савăк чунсем ытларах, —
Савнă чĕппĕм, сăпкара
Саркаланса çывăрах.

— Сарту енне кайнă чух
Çаранасем ытларах, —
Сарă хĕвел каннă чух
Саркаланса çывăрах.

— Сана пÿрнĕ çут телей
Сăпка тулли пултăрах, —
Сар хĕвел те сан тĕле
Савăк чунпа пăхтăрах.

## СĂВАПСĂР КУН

*Шўтлев*

Ай-хай Куянкка
Сăвапсăр кун çуралнă, —
Сăвапсăр кун çуралса
Йăкăслăхне çухатнă.
Йăкăслăхне çухатсан
Каппайланма пуçланă.

Ай-хай Тилешке
Сăвапсăр кун çуралнă, —
Сăвапсăр кун çуралса
Сăпайлăхне çухатнă.
Сăпайлăхĕ çухалсан
Чееленме пуçланă.

Ай-хай Кашаман
Сăвапсăр кун çуралнă, —
Сăвапсăр кун çуралса
Йăвашлăхне çухатнă.
Йăвашлăхĕ çухалсан
Куштанланма пуçланă.

Ай-хай Упашка
Сăвапсăр кун çуралнă, —
Сăвапсăр кун çуралса
Унайлăхне çухатнă.
Унайлăхĕ çухалсан
Усаллана пуçланă.

## ÇĂКА

*Юптару*

Çумăр хыççăн çил лăпланчĕ.
Куççульне тăка-тăка,
Тем çитменшĕн йĕрсе ячĕ
Çемçе кăмăллă Çăка.
— Ма йĕретĕн, тусăм? — терĕ
Сарă кайăк тĕлĕнсе.
Ват çăка пуçне çĕклерĕ,
Сас кăларчĕ эрленсе:
— Чăвашсемшĕн ĕлĕк эпĕ
Хаклă пулнă ытла та,
Чакса ларчĕ ман хисепĕм —
Халь сырмаççĕ çăпата.
Кун пекех пулас пулсассăн
Ят та тухĕ манăça —
Çак ыйту-çке ир тăрсассăн
Пăлхатать ман тăн-пуça.
Ват Çăка çине-çине
Шăлса илчĕ куççульне.
— Çапла, — терĕ Сарă кайăк, —
Пурнăç хăвăрт улшăнать:
Халь эс урăх ĕçе кайăн —
Ма йĕретĕн çукшăнах...

Пĕлĕт тарчĕ. Хĕвел тухрĕ —
Шевле сапрĕ çĕр çине.
Ыр Çăкан куççулĕ хухрĕ,
Çăка уçрĕ кăмăлне.

## ÇУРХИ УЯВ

*Пулмăш*

Ах, чух, çавăн чух,
Çурхи уяв çитнĕ чух,
Сĕрме купăс каларăм —
Пур халăха ташлатрăм.
Авăк хÿре автансем
Авкаланса ташларĕç,
Куракпала кăрккасем
Кулкаласа ташларĕç,
Пăрчăканпа чĕпписем,
Пăркаланса ташларĕç,
Сар кĕрĕклĕ тилĕсем
Саркаланса ташларĕç,
Упамсарти упасем
Ура хуçса ташларĕç,
Чапрас куçлă куянсем
Чаркаланса ташларĕç.
Такасеме сурăхсем
Такмак-сăвă каларĕç,
Акăшсемпе-ăсансем
Ăслапала сăйларĕç.
Ах, чух, çавăн чух,
Ташă хĕрсе çитнĕ чух,
Çăмарта пек утпала
Çăхан иртрĕ кустарса:
— Çавра тĕнче халăхне
— Çитĕ, — терĕ, — култарса!
Çитĕ çав!

## ÇĂКĂР ТАВĔ

*Легенда*

Пĕррехинче-пĕринче
Пĕр илемлĕ ир çинче,
Тĕл пулсассăн пасарта
Тава кĕнĕ çиччĕн тан.
Пуçласа пĕри калать:
— Çăкăра, тет, ар тăвать.
Иккĕмĕш сăмах хушать:
— Çăкăра, тет, çĕр тăвать.
Виççĕмĕш сăмах хушать:
— Çăкăра, тет, çил тăвать.
Тăваттăмĕш сăмах хушать:
— Çăкăра, тет, тар тăвать.
Пиллĕкмĕш сăмах хушать:
— Çăкăра, тет, нӳр тăвать.
Улттăмĕш сăмах хушать:
— Çăкăра, тет, вут тăвать.
Çиччĕмĕш çине тăрать:
— Çăкăра, тет, ĔÇ тăвать.
Тав итлекен халăха
Эп пĕтертĕм юмаха.



## ÇĔР ЧӐКЛЕВÇИ

*Юмах*

Çĕр çинче,
Çĕрпел ялĕн хирĕнче,
Çĕр те çирĕм çул тари
Çĕр чӳкленĕ пĕр старик.

Çĕр те çирĕме çитсен,
Çĕр чӳклесе пĕтерсен,

Çĕр чавтарса мăй тари
Çĕре кĕнĕ çав старик.

Çĕр чавтарса мăй тари
Çĕре кĕрсен çав старик,
Çĕр çын пырса ....
Çĕр çын çапла юрланă:

Çĕр çинче...
Çĕнĕрен

## ÇУЛÇӲРЕВ

Çул çине тухатпăр —
Таçта та пулатпăр:
Икел те пухатпăр,
Мăйăр та тататпăр.
Эх, çулçӳрев!

Çул çине тухатпăр —
Таçта та пулатпăр:

Серте те тататпăр,
Çырла та тупатпăр.
Эх, çулçӳрев!

Çул çине тухатпăр —
Таçта та пулатпăр:
Кăмпасем тататпăр,
Пучахсем пухатпăр.
Эх, çулçӳрев!

Çул çине тухатпăр —
Таçта та пулатпăр:
Вăйăсем вылятпăр —
Вăй-хала туптатпăр.
Эх, çулçӳрев!

## ТĂРĂЛТИ ТĂРИ

Тăри ирех вăранать —
Тӳпе тăрне хăпарать,
Тӳпе тăрне хăпарса
Тăрăлтатма тытăнать:

— Тăр-тăр-и, тăр-тăр-и,
Тăрă тӳпе куртăр-и,
Тăрă-тăрă тӳпере
Тăрисене куртăр-и?

Тăри юрри тӳпере
Тăрă шыв пек хумханать,
Тăри юрри чĕрере
Таса туйăм çуратать:

— Тăр-тăр-и, тăр-тăр-и,
Тăрса ĕçе тухрăр-и,
Тăрса ĕçе тухсассăн
Тар юхтарса куртăр-и?

Тăрăлтатса юрласси
Тăрăшмасăр пулас çук, —
Тăрăшасси-тăвасси
Тăри ĕçĕ кашни çул.

**ТАРĂХУ**

*Пулмăш*

Так ахалех Такана
Тарăхтартăм ирхине:
Тĕпсĕр, пушă такана
Тухса хутăм ун умне.

Така, тарăх пуснăран
Туя турĕ хулăран, —
Тăр шыв пуçне кайнăран
Така сулăнчĕ вăйран.

Турăх çиме хал çукран
Тухтăр чĕнчĕ хуларан, —
Тунсăх чирĕ чирĕ пуснăран
Тухаймасть халь картаран.

## ТЕМЁСКЕР

*Ытарлăх*

Ака çинче,
Ăсан вĕçмен кунсенче,
Вăрантăм та ыйхăран,
Кĕрхи сасă пулнăран,
Çăмах çисе çупала
Тухса утрăм çулпала.
Утсан-утсан хайхискер,
Хуса çитрĕ темĕскер:
Ашак теме — ашĕ çук,
Ăсан теме — ăсĕ çук,
Куян теме — куçĕ çук,
Пулă теме — пуçĕ çук,
Сăпса теме — сăнĕ çук,
Тăрна теме — тăнĕ çук,
Тĕкше* теме — тĕкĕ çук,
Хăлат теме — хăлхи çук,
— Чĕкеç теме — чĕлхи çук,
Шăши теме — шăмми çук,
**Юпах теме — юнĕ çук,
Ялман теме — ялĕ çук...

Калăр-халĕ хĕр-ывăл,
Çав япала мĕскер вăл?

Тупкав тупсăмĕ: Ĕмĕлке

* Тĕкше — сĕрлĕх хурчĕ, тĕклĕ хурт (гусеница)
** Ялман — çĕр мулкачисен йышне кĕрекен чĕрчун (тушканчик)

## ТИЛЁПЕ ĂСАН

*Юмах*

Выçă хырăм хушнипе
Тилĕ тухнă йăвинчен,
Йывăç-курăк хушшипе
Чупса пынă нумайччен.

Чупса пынă нумайччен
Мĕкĕт варне çитиччен.
Мĕн калас çав вар çинчен? —
Шыв та çук ун тĕпĕнче.

Çак тип варăн пуçĕнче
Сарă Тилĕ чарăнать...
Умĕнчех, ав, çĕр çинче,
Ват Ăсаҫ лара парать.

Чее Тилĕ ун патне
Системесĕр пырать те —
Выçă хырăм апатне
Кап! лектерсе илет те.

Ахлатса илет Ăсан,
Тыткăнать ăс вылятма:
Вылятсан кăна ăса
Май килес пек хăтăлма.

Май тупать те ăсласа
Сар Тилле çапла калать:
— Тытайрăн та тытасса,
Анчах тем сиксе тухать.

Пӑтӑрмахран шикленсе
Тилӗ ним те шарламасть, —
Ҫӑлӑнасшӑн хӗмленсе
Леш калаҫма чарӑнмасть.

— Тытайрӑн та тытасса,
Анчах тем сиксе тухать...
Тытайрӑн та тытасса,
Анчах тем сиксе тухать...

Сарӑ Тиллӗн шутсӑрах
Капланса килет ҫилли:
— Ӑссӑр кайӑк, ан павра,
Эс ҫуралнӑ ман валли!..

— Ҫаплипе вӑл ҫапла та,
Апла та мар, Тилӗ тус, —
Тепӗр хут калатӑп та
Тек чӗнместӗп — хуть те пус!

— Эй, хатарлӑ ыр хӑта,
Пархатарлӑ Тилӗ тус,
Ҫаплине вӑл ҫапла та,
Асӑрханӑ пул, асту!..

— Эп кӗтӳ хуралӗ мар
Темӗн те пӗр астума,
Эсӗ тивӗҫнӗ мана —
Пуҫра асӑм ҫав кӑна.

— Ҫаплипе вӑл ҫапла та,
Апла та мар, Тилӗ тус, —

Тепĕр хут калап, хăта,
Пĕлмене персе ан юс!..

— Мĕн тесе юсатăп эп,
Ман юсма сăлтавĕ çук,
Сан ăсна аван пĕлеп —
Чĕлхӳпе мана ан çу.

— Ан хăрат-ха эс мана,
Ман хăрас мехелĕм çук:
Ларса çийĕп те сана —
Тислĕк пулĕ сан пуçу!

— Çиессе эс çийĕн те...
Апатне пит ан ырла:
Паян çинĕ эп хирте
Йыт çырли текен çырла!..

— Çирĕн пулĕ темĕн те,
Выçă мар сан пĕсехе —
Усаллине нимĕн те
Эп курмастăп халлĕхе.

Ăслăхне пухса Ăсан
Малалла çапла калать:
— Пурăнас килет пулсан
Сан çакна пĕлес пулать:

Ларса çийĕн те мана —
Хырăмна çырла кĕрет,
Çырларан, асту çавна,
Хаяр йытă çитĕнет.

Вăл вара сана шалтан
Кăшламашкăн тытăнать, —
Мана çиччен малтан
Сан çавна чухлас пулать.

Тем пулать хайхи Тилле —
Хăснă евĕр йĕкленет,
Ăсана силле-силле
Чăтлăха вăл сирпĕтет.

Çав çех кирлĕ Ăсана,
Çав çех кирлĕ Тилĕрен:
Йăвине вăл ăсанать
Хăтăлса чĕр вилĕмрен.

Сар хĕвеллĕ пурнăçран
Ан васка çав уйрăлма,
Сывлăх пур чухне пуçра
Хытă тăрăш пурăнма.

## ТИЛĔПЕ ШĂШИСЕМ

*Юмах*

Ана çине çитет те
Тилĕ çапла кĕвĕлет:
— Шăши туссем, килĕр те
Ман кĕввĕме итлĕр, — тет.
Тимлĕ Шăши тухас çук —
Тилĕ кулли пулас çук.

Ана çине çитет те
Тилĕ çапла кĕвĕлет:
— Шăши туссем, килĕр те
Ман такмака итлĕр, — тет.
Тимлĕ Шăши тухас çук —
Тилĕ кулли пулас çук.

Ана çине çитет те
Тилĕ çапла сиккелет:
— Шăши туссем, килĕр те
Ман ташшăма курăр, — тет.
Тимсĕр Шăши тухать те —
Тилĕ кулли пулать те!

## ТИЛĔПЕ КУРАКСЕМ

*Юмах*

Пĕррехинче,
Пĕр салхуллă ир çинче,
Тилĕ тус тухать те йăвинчен,
Тилĕрсе çӳрет хал пĕтиччен.
Унта пырать — нимех те çук,
Кунта пырать — нимех те çук!
Ăçта кайса мĕн тумалла,
Ăçтан çимелĕх тупмалла?
Сунар ăнса пыман енне
Чупса анать тип вар тĕпне.
Вар тĕпĕнче мĕскер курать? —
Аш татки çĕрсе выртать.

Сӑмсана ҫурать шӑрши!
Ку аш мӗскер тума юрать?..
Тилле айван шутне ан хур,
Ун чеелӗх сӗмӗ пур.
Ак вӑл кӑштах ларса уйлать,
Мӗн кирлине часах тупать.
Вӑр-вар кӑна лӑс хӳрине,
Вар-хырӑмне, урисене
Аш таткипе сӗрсе тухать,
Хӑй ҫине виле шӑрши пухать.
Ҫак ӗҫе тусан вара
Ҫыр хӗрне вӑл хӑпарать,
Тӳпем ҫӗре тухса выртать,
Телей кӗтсе шӑлне ҫыртать.
Кӗҫех, усал шӑрша сиссе,
Вӗҫсе килеҫҫӗ кураксем.
Кураҫҫӗ Тилӗ выртнине,
Сӑрса илеҫҫӗ "мӗскӗне".
Тилли ҫавна анчах кӗтет,
Вӑл хӑй ӗҫне аван пӗлет:
Авантарах пӗр куракне,
Ҫӑвар патнех ҫитейнине,
Куҫ хывать те кап! кӑна
Лектерет чӗр капкӑна.

## ТӖКӖР

Тӗкӗр витӗр пӑхатӗп —
Тӗрлӗ кайӑк куратӑп.

Ав вӗҫсе иртет ӑсан —
Инҫех мар иккен вӑрман.

Ав вĕҫсе иртет курак —
Унăн тумĕ хуп-хура.

Ав вĕҫсе иртет тăри —
Питĕ хитре ун юрри.

Ав вĕҫсе иртет чĕкеҫ —
Вĕҫнĕ чух вăл пĕчĕкҫеҫ.

Ав вĕҫсе иртет шулли —
Ăна кирлĕ шыв кӳлли.

Ав вĕҫсе иртет ыйхан* —
Вăл килсессĕн выртса кан.

## ТУССЕМ

*Йăлхав*

Слон, Кушак тата Автан
Туслă пулнă авалтан.

Туссем акă пĕринче,
Пĕр илемлĕ ир ҫинче,
Лараҫҫĕ те шар ҫине
Улăхаҫҫĕ тӳпене.

Ҫӳл тӳпере — уҫлăхра
Туссем хывнă ҫĕнĕ ҫул —
Пăшăрханать тус-тăван —
Туссем пирĕн ҫук та ҫук.

---

* Ыйхан — пĕчĕк тăмана, вырăсла — сплюшка

Çухалман иккен туссем —
Пултаруллӑ çамрӑксем:
Ултӑ-çичĕ уйӑхран
Таврăнаççĕ уçлӑхран.

Уçлӑхри ĕççем çинчен
Эп юмахлӑп тепринче.
(Юмахçӑ шӑпланать).

## ТИГР

*Хӑрушӑ сӑвӑ*

Тигр пурнать тигрла —
Канура вӑл кӑнтӑрла,
Сунара тухать çĕрле —
Хўтĕ вырӑн хатĕрле!

Тухрӑн пулсан йӑваран —
Кашни утӑмра сыхлан:
Çăварна карса ан лар —
Çухалма часрах пултар!

Тигр йӑли çавнашкал —
Тайгара вӑл тĕп хуçа:
Тĕл пулсассӑн упашка —
Ӑна та çапса хуçать.

Тигр пурнать тигрла —
Канура вӑл кӑнтӑрла,
Сунара тухать çĕрле —
Хўтĕ вырӑн хатĕрле!

## УЛӐХРА

Паян эпӗр улахра,
Улахра мар — улӑхра:
Улӑх ути кашма пек,
Пиҫнӗ ҫырли салма пек.

Паян эпӗр улӑхра,
Улӑхра мар — хӑнара:
Ҫырла татса ҫӳретпӗр —
Татнине пӗр ҫиетпӗр.

Паян эпӗр хӑнара,
Хӑнара мар — ырлӑхра:
Ҫырла нумай ҫинӗрен
Тута-ҫӑвар кӗп-кӗрен!

## УЙӐХПИ КУҪҪУЛӖ

*Юмах*

Аслӑ, ирӗк, тӗпсӗр тӳпере
Ҫӑлтӑрсем ташлаҫҫӗ ирӗкре.
Ҫутлӑхсен хушшинче ирччен
Уйӑхпи ҫӳрерӗ пӗччен.

Ах, ӑҫта-ши кӑмӑл шырани,
Кама кирлӗ эпӗ пӑлханни?

Кампа йӑпанас ман йӑл кулса,
Кампа сӑмахлас ман чун уҫса?

Иксӗлми кичемлӗх пуснипе
Уйӑхпи пит ҫурӗ куҫҫульпе.

Ун таса куҫҫулӗ ир енне
Сывлӑм пулса ӳкрӗ ҫӗр ҫине.

## ТОПОЛЬ

Тӗрлӗ йывӑҫ хушшинче
Тополь ятлӑ йывӑҫ пур.
Тополь ятлӑ йывӑҫсен
Хӑйне майлӑ йӑли пур.

Вӗсем папка ҫураҫҫӗ
Кашни ҫулах ҫуркунне,
Ҫав папкаран тӑкаҫҫӗ
Ҫӑмӑл мамӑк ҫӗр ҫине.

Майсӑр ҫӗрте мамӑксем
Ҫӑмхаланса выртаҫҫӗ —
Хӗлхем пырса ӳксенех
Пушар пулса ҫунаҫҫӗ.



## УПА ТАТА ЮПА

*Юптару*

Утмаçулăн хĕрринче
Ларнă пулнă пĕр Юпа.
Çав Юпана пĕринче
Пырса çапăннă Упа.
Аслати пек саспала
Кăтăра пуçлать Упа:
— Ма тĕл пултăн манпала
Мур патне каяс Юпа!?
Мана çапрăн çамкаран —
Пăрăнма пĕлмерĕн:
Çавăнпа та янахран
Эп те хирĕç лектеретĕп!
Урнă пек пулса Упа
Юпана шав тăрмалать.
Ним тума пĕлмен Юпа
Упана çапла калать:
— Упа тусăм — услап чун,
Санăн пур вĕт икĕ куç:
Вĕсене эс утнă чух
Иккĕшне те лайăх уç!

Сăмах пĕтнĕ майпала
Çавра ăслăх çырмалла:
Çӳрес марччĕ çулпала
Çылăхпала çурмалла.

## УПАСЕМ

*Шӳтлӗ юрӑ*

Авӑркасси уйӗнче
Ӑрша вӑй вылять, —
Аслӑ вӑрман варринче
Упа купӑс калать.
Упа купӑс калать.

Упа майри юхӑнса
Улах ташши ташлать, —
Урӑм-сурӑм хумханса
Хура вӑрман кашлать.
Хура вӑрман кашлать.

Услап упа ҫурисем
Такмакласҫӗ урса, —
Сӗм вӑрманта халӑхсем
Савӑнаҫҫӗ курса.

## УЯРККА*

— Ку кӑпшанкӑ — кукамай —
Пӗлтереҫҫӗ пӗрисем,
— Ку уяр, кӑпшанкӑ мар, —
Систереҫҫӗ теприсем.

---

* Уяркка — пӗчӗк кӑпшанкӑ, вырӑсла — божья коровка. Ҫак сӗрлӗхӗн тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗ ят. Акӑ унӑн ячӗсем: вӗрвитса, вири-вири кукамай, уяр, уяркка тата ытти те. Автор ку сӑвӑра ҫак сӗрлӗхӗн икӗ тӗрлӗ ячӗпе усӑ курса сӑмах ваййи тӑвать.

Акă манăн алăра
Пĕчĕкçеççĕ кукамай,
Эп каларăм уяра
Çӳлелле вĕçтернĕ май:
— Вĕç, уярăм, çиле май —
Уяртса ярас пулсан,
Лап! Çĕре ӳк, кукамай —
Йĕпе кун пулас пулсан.

Ман уярăм-кукамай
Вĕçсе кайрĕ инçене —
Ăнкарать вăл япăх мар
Çут çанталăк йăлине.

## ҪĂРУШКА

*Тупкав*

Авал чух,
Ака пĕтсе пынă чух,
Алă парса алăка,
Йӳле ярса тăлăпа,
Тухса утрăм çулпала
Хутаç тулли хутпала.
Утнă май, ухăнса çеç пынă май,
Астуман та,
Сисмен те —
Тем шуйхатрĕ пĕлĕте.
Çавăн чух,
Çăва тĕлне çитес чух,
Те инçетри катаран,
Те çывăхри çырмаран,

Сикрӗ тухрӗ ланчашка —
Урӑм-сурӑм хӑрушка.
Тапӑр таппи тӗлӗнче,
Тӗнчӗк пулса, тӗлӗнсе
Хир варринчи юпа пек,
Пӗр пӗчченех тӑтӑм эп:
Ма пӑсӑлчӗ паян кун,
Мӗн япала пулчӗ ку?

Тупсӑмӗ: Ку вӑл ҫавраҫил пулнӑ.

## ХӐМӐР КОСТЮМ

Упа выртать йӑвинче —
Хӑтлӑ хӑвӑл тӗпӗнче, тӗпӗнче.
Чӑрӑш лаппи айӗнче, айӗнче,
Хӑмӑр костюм — ҫийӗнче, ҫийӗнче.
Хӑмӑр костюм пит аван —
Ҫӗтӗлес ҫук нихӑҫан, нихӑҫан.
Ҫавӑнпа та ҫак айван
Тумӗпех выртать ялан, эх, ялан.
Упа тухать ҫуркунне
Сар хӗвелӗн ҫуттине, ҫуттине.
Вӑл пит имшер ун чухне —
Пӑхма емсӗр ун ҫине, ун ҫине.
Ҫикелесен пӗр кана
Вӑл якалма тытӑнать, тытӑнать.
Чӑннипех вара ӑна
Утаман теме пулать —
Эх, пулать!

## ХИР ЧЕЧЕКĔ

Ак пыратăн утса улăхпа —
Киленетĕн умри пурлăхпа.

Ман умра чечексем, чечексем:
Саррисем, хĕрлисем, шуррисем.

Акă кур: ман çине кусĕпе
Пĕр чечек тимлесе пăхать пек.

Эпĕ хам та пăхап ун çине
Пĕлес пек чечексен чĕлхине.

Кĕç хупларĕ çӳлти хĕвеле
Тĕлсĕр пĕлĕт татки сĕмсĕрле —

Самантрах салхулланчĕ чечек
Тунсăх пур пек таса чĕринче.

Кулса ячĕ хĕвел çĕнĕрен
Татăк пĕлĕт шуса иртнĕрен —

Çавна туйрĕ черченкĕ чечек,
Çавна туйрĕ чĕреллĕ çын пек.

Калăн çав, улăхри çак чечек
Чĕрĕ туйăм упрать чĕринче,

Ун чĕри пĕлес пек хăй çине
Кам ытарлăн савса пăхнине.

## ХИТРЕ КĂМПА

*Пĕлкĕш*

Ав ларать хитре Кăмпа,
Вăл пит хӳхĕм калпакпа.
Ун калпакĕ хĕрлĕскер,
Питĕ-питĕ хитрескер.

Вăл пурне те илĕрттет,
Хăй патне пыма чĕнет:
— Мĕн пурак илсемĕр те
Ман пата килсемĕр, — тет.

Çил ачи вĕçсе иртет,
Вĕçнĕ майĕн систерет:
— Çав кăмпа, илемлĕскер,
Çав тери сиенлĕскер!

Ак Ӳпре вĕçсе пырать,
Вăл Кăмпа çине ларать:
Ун ăшне хыпса пăхать —
Çавăнтах вилсе выртать.

Çак кăмпа — Шăна Кăмпи
Тумĕпе илемлĕ пит:
Хитрине кура татан —
Ху валли инкек тупан.



## ХУШКА ÇАМКА

Çамрăк йытă — айванскер,
Хушкарах çамкаллăскер,
Тухса чупнă сунара...
Унта курнă мыскара.

Айван чун — Хушка Çамка
Енлĕх тупнă йĕрлесе:
Ав, кусса пырать çăмха,
Çăмхинче — хитре йĕпсем.

Çамрăк йытă — хавшаскер
Кап! çех хыпать çăмхана, —
Лешĕ — çивчĕ йĕплĕскер
Чак! лектерет айвана.

Нăйкăшать Хушка Çамка:
— Нăйăк! Нăйăк! — çухăрать, —
Сăмсаран ăна çăмха
Лайăх панă курăнать.

Айван йытă нăйкаса
Асапланчĕ çĕрĕпе.
Халь иртет шав пăрăнса
Тĕл пулсассăн Чĕрĕпе.



## ХĂРАНИ

*Юптару*

Куртăм хĕрлĕ вăкăра —
Темĕн пулчĕ кăкăра,
Темĕн пулчĕ хырăма —
Эп пуçларăм хăрама.

Вăкăр пăхрĕ ман çине
Сив куçпа çине-çине.
Мĕн тăвас-ха, мĕн тăвас,
Мĕнлерех ăслай тупас?..

Питĕ ырă кăмăлпа
Сăмахларăм вăкăрпа:
— Вăкăр тусăм, ма урас —
Хирĕçмесĕр пурăнас.

Эп çапла каланипе
Вăкăр тĕлĕнчĕ манран,
Хирĕç ăшшăн пăхнипе
Вăкăр пăрăнчĕ умран.

## ХАЛЛАП

*Юмха*

Халлап хапха тăрринче
Халтăртатса ларнă, тет.
Халтăртатса ларнипе
Халтан кайса çитнĕ, тет.
Халтан кайса çитсенех
Хăлат пулса вĕçнĕ, тет.
Халь те пулин çав Халлап

Хăлат пулса вĕçет, тет.
Хăлат пулнă çав Халлап
Хăçан кунта килĕ-ши?
Хăçан халăх умĕнче
Халлапланса ларĕ-ши?

Халăх умне тухасси
Халсăрсенчен пулмасть вăл, —
Халлап-юмах хайласси
Халлапçăран килет вăл.

### ЧĔКЕÇĔМ

— Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеçĕм,
Чипер питлĕ пикеçĕм,
Ма сивĕрен хăратăн —
Хĕл çук çĕре таратăн.

— Эпĕ хамăн ĕмĕре
Ирттеретĕп вĕçевре:
Хĕл сивви çывхарнă чух
Сывлăшра апатăм çук.

— Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеçĕм,
Чипер питлĕ пикеçĕм,
Ăшă кунсем çитсессĕн
Ма каялла килетĕн?

— Эпĕ хамăн ĕмĕре
Ирттеретĕп вĕçевре:
Ăшă кунсем çитнĕ май
Сывлăшра апат нумай.

## ЧЕЕ ТИЛĔ

Сар тилĕ, лăс хўреллĕскер,
Челеёхпе пит пуянскер,
Хитре кунсем куçран çĕтсен,
Çимеллисем пĕтсе çитсен,
Пуçне хывса мĕнпур тăна
Тухса утать ухатана.
Уйпа утса çўренĕ май,
Хирпе хирсе çўренĕ май,
Кураях каять: пĕр тип варта
Виле курак çĕрсе выртать.
Чее сунарçă чарăнать,
Пуçне усса кăштах уйлать,
Кĕçех тути кулса ярать —
Ултав меслечĕ вăл тупать..
Васкавлăн Тилĕ хырăмне,
Урисене, сар хўрине,
Виле ўтпе сĕрсе тухать,
Суя виле шăрши пухать.
Вара, тухать те уй варне,
Выртать карса măн çăварне.
Тавралăха ак Тилĕрен,
Виле какайĕ сĕрнĕрен,
Часах усал виле шăрши,
Сарлать нумай чике тăршши.
Кĕçех шăрша туйса-сиссе
Вĕçсе çитеççĕ кураксем.
Ак кураксем "чĕр вилене"
Турта пуçлаççĕ пур енне,
Турам-турамăн астивме.
Тилли çавна çех кĕтнĕ мĕн!

Вăл яш! тăрса пĕр куракне,
Чи самăр, çуллă ӳтлине,
Савса куçлать те — хап! кăна
Ярса тытать чĕр капкăна.

## ЧĔКЕÇСЕМ

*Чĕмлĕх*

Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеçсем —
Чипер кĕвĕ ăстисем:
Чипер кĕвĕ ярăмне
Чĕнтĕрлем-ха хут çине.

Чĕм пулсассăн читлĕхре
Чухăн мар эс тĕнчере:
Чухăн мар, чухăн мар,
Чухăн тесе калас мар.

Чун пулсассăн чĕрере
Чухăн мар эс тĕнчере:
Чухăн мар, чухăн мар,
Чухăн тесе калас мар.

Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеçсем —
Чипер кĕвĕ ăстисем:
Чипер çырнă йĕркесем —
Чуна çывăх кĕвĕсем.



## ЧЕПЧЕН

Симĕс-симĕс тумланнă
Хура вăрманта,
Хырсемпе картланă
Хӳтĕ вырăнта,
Пурăннă пĕр кайăк
Чип-чипер чепчен;
Унăн йăви пулнă
Çирĕк айĕнче.
Чепчен ир вăраннă,
Çăваннă çăлра.
Сар хĕвел хавассăн
Кулнă вăхăтра,
Ĕнтĕ юрламасăр
Кайăк тӳсес çук.
Чепчен пулнă йĕрĕ, —
Лăпланма пĕлмен:
Вĕçнĕ каçăн-ирĕн,
Савăннă куллен.
Хушăран ăш çумăр
Çуса иртнĕ чух,
Уççăн сывлать кăкăр, —
Хавхаланать чун,
Е шухă çил çемĕ
Шăхăрсан саспа,
Ал çупма та çепĕç
Мăшăр çунатпа.
Ах, ытла та савăк
Ирĕк çут тĕнче,
Савмасан та савăн,
Юрлăн ун çинчен.
Пурнăçа юратнă

Çак чипер чепчен:
Вăл çапла юрланă
Хыр лăски çинче:
Ешерет тавралăх,
Кăн-кăвак инçет...
Ах, ытла та лайăх,
Ырă мĕн тĕнче!
Çут хĕвел ачашшăн
Çутатать-пăхать,
Ăшшине йăвашшăн
Çĕр çине тăкать.
Ăш çумăр та ăшшăн,
Çемçетсе чунне,
Çуса иртет хушшăн
Типĕ çĕр çине.
Çĕр-пин вĕçенкайăк
Савăнать-юрлать;
Вĕсен юрри лайăх
Кăмăла лăпкать.
Уй-хир тулли тырă
Ылтăн мул хитре
Тĕнче епле ырă
Мĕн тери хитре.

## ЧĂНАХ-ШИ?

Аслă вăрман варринче,
Вăрăм курăк хушшинче
Кашласа ларать юман —
Ун çинче ўсет юсман.
Чăнах-ши?

Аслă кӳлĕ варринче,
Ура пусман çĕр çинче
Сарса хунă сĕтел пур —
Сĕтел çинче пиçнĕ хур.
Чăнах-ши?

Аслă вăрман варринче,
Çулнă курăк хушшинче
Ешерсе ларать хупах —
Çав хупах çинчен сăмах.
Чăнах-ши?

Аслă ялăн варринче,
Ашшĕ-амăш килĕнче
Ӳссе çитнĕ пĕр кахал —
Çывăрнă вăл пит сахал
Чăнах-ши?

## ШУÇĂМПИ

Шухăшласа пăхăр-ха,
Шухăш вĕçне тухăр-ха;
Шурă акăш лайăх-и,
Шурă чарлан лайăх-и?

Шур акăш та пит лайăх,
Шур чарлан та пит лайăх,
Пуринчен те лайăххи
Ирхи шуçăм кайăкĕ.

Ирхи шуçăм кайăкĕ
Ирпе ирех вăранать,
Шăнкăрав пек юррине
Шăрçалама тытăнать:

— Эпĕ шуçăм кайăкĕ,
Эп кайăксен лайăхĕ,
Эпĕ — хитре Шуçăмпи,
Эп юрлама ăста пит.

Ирпе ирех тăратăп —
Ирхи юрра юрлатăп,
Ир тăракан çынсене
Ирхи салам калатăп.

Ирпе ирех тăракан —
Ирĕклĕрех курнакан,
Ирĕклĕрех курнакан —
Икĕ ĕмĕр пурнакан!

## ШĂНЧАС*

Шăнчас çинчен сăмах пуçлатăп,
Шăнчас çинчен сăнав пырать:
Шăнчас пирки тӳрех калатăп —
Шăнчас ытла ăшша савать.

---

* Шăнчас — вăрман кайăкĕ, тепĕр тĕрлĕ — сăнчас, вырăсла — зяблик.

Шăрантарса хĕвел пăхсассăн,
Шăна-пăван сĕрлес пулсан,
Шăрăхпала уй-хир тулсассăн —
Шăнчас ырлать хавхаланса.

Шăнчас пуçлать илемлĕ юрă,
Шăнкрав сасси пек кĕвĕлет:
— Шăрăх кун пит савăк, ырă,
Шăрăха чунтан саватăп, — тет.

Шăрăх хуçи — хĕвел хуплантăр
Шăналăк пек шур пĕлĕте, —
Шăнчас çавна туйса пĕр тапхăр
Шăпах пулать, йӳтенĕ пек.

Шăнчас ăшша савать — пĕлетпĕр —
Шăнчас сивве туять пит час;
Шăнсан, ытла çӳçеннĕрен-тĕр
Шăнчасăн ячĕ те ШĂНЧАС.



## ЫЛТĂН ЫВĂС

*Йăмха*

Авал та мар — паян та мар,
Аван та мар — япăх мар,
Авăрксра — кĕтесре,
Арпалăх пек çĕрпӳртре
Икĕ ватă пурăннă —
Питĕ имшер курăннă.

Икĕ ватă килĕнче,
Йывăç çӳпçе ăшĕнче,
Пулнă пăхăр пĕкече,
Пулнă кĕмĕл кĕленче,
Пулнă тата темĕскер —
Ылтăн ывăс майлăскер.

Ват çынсене темĕскер —
Ылтăн ывăс тенĕскер,
Ир те каç та çитернĕ,
Ир те каç та ĕçтернĕ,
Сивĕ чухне хĕрхеннĕ —
Çиттипеле чĕркенĕ.

Акă çапла пĕринче,
Каçхи кӳлĕм тĕлĕнче,
Çавра çӳпçе ăшĕнчен
Пат çухалнă темĕскер —
Ылтăн ывăс хĕмлĕскер.

Çухалсассăн темĕскер —
Ылтăн ывăс ятлăскер,

Ват карчăк та кулянать,
Ват старик те кулянать, —
Çав куляну пĕтмесĕр
Юмах яни илемсĕр.

## ЭП КАЙСАССĂН...

*Шӳтлев*

Курти кайнă вăрмана
Курăк-серте пуçтарма:
Куян тухнă куйланса —
Курти тарнă шуйханса.

Тимрук кайнă вăрмана
Типĕ шанкă пуçтарма:
Тилĕ тухнă тилĕрсе —
Тимрук тарнă вирхĕнсе.

Кашук кайнă вăрмана
Кăмпа татса пуçтарма:
Кашкăр тухнă ахăрса —
Кашук тарнă макăрса.

Урти кайнă вăрмана
Улма-çырла пуçтарма:
Упа тухнă уласа —
Урти тарнă çухăрса.

Эп кайсассăн вăрман
Упаранах хăрас çук:
Мĕншĕн тесен упасем
Ку таврара пулас çук!

## ЭП КАЛАРĂМ

Эп каларăм автана:
— Автан, пар-ха туруна,
Манăн çӳç турамалла —
Халăх çине тухмалла.

Эп каларăм автана:
— Автан, пар-ха çурлуна,
Манăн курăк вырмалла —
Тутлă утă тумалла.

Эп каларăм автана:
— Автан, пар-ха аттуна,
Манăн вăййа тухмалла —
Ташă ăсти пулмалла.

Эп каларăм автана:
— Автан, пар-ха каччуна,
Манăн Çара каймалла —
Утлă салтак пулмалла.



## ЭРНЕТТЕЙ

*Юмах*

Тахçанах ку пулнă,
Пулнă авалрах, —
Асăнмалăх юлнă
Халăхра юмах.

Тарçăра ĕçленĕ
Пĕчĕк Эрнеттей:
Темĕн те çĕкленĕ,
Йăтнă темĕн те.

Ĕçĕ йывăр пулнă
Çак пĕчĕк ачан, —
Вăл çавах та кулнă,
Макăрман нихçан.

Вăл турттарнă утă,
Сĕтĕрнĕ вак чул, —
Пĕр чух пулнă тутă,
Выçă — тепĕр чух.

Пурпĕр парăнман вăл
Пурнăç нушине, —
Кулнă савăнса вăл,
Тăснă юррине.

Вĕçĕм ĕмĕтленнĕ
Пĕчĕк Эрнеттей:
— Ман тупасчĕ, — тенĕ, —
Пысăк тӳпеттей.

Питĕ тĕлĕнтернĕ
Çак сăмахĕ ун:
Мĕн ăсне ӳкернĕ
Пӳрнеске пек чун.

Нумайччен пупленĕ
Халăх ун çинчен,
Тĕпчеме именнĕ,
Темшĕн, хăй çинчен.

Шухă вăхăт шунă
Хăйĕн çулĕпе,
Шухăш чупнă унăн
Ансăр йĕрĕпе.

Пĕррехинче пынă
Тусĕ ун патне, —
Çĕлĕкне вăл хывнă —
Ыйтнă кирлине.

— "Эс ма хулăм тирлĕ,
Пĕчĕк Эрнеттей, —
Сана мĕншĕн кирлĕ
Пысăк тӳпеттей?"

— "Ман пулас пулсассăн
Пысăк тӳпеттей, —
Сывламăттăм ассăн, —
Тенĕ Эрнеттей.

— "Каласамччĕ, тусăм,
Пĕлтерсем мана —

Тӳпеттей мӗн усӑ
Кӳрӗччӗ сана?"

— "Ах, пулас пулсассӑн
Пысӑк тӳпеттей, —
Сывламӑттӑм ассӑн
Эпӗ пӗрре те.

Ҫавна тӑхӑнас-тӑк
Хуплӗччӗ куҫа, —
Куҫлӑхпа пӑхсан та
Курмӗччӗ хуҫа.

Ман хуҫа — Мӑн Савӑл,
Пит усал куштан, —
Мана кун каҫа вӑл
Кантармасть кӑшт та".

Ав мӗскер шутланӑ
Пӗчӗк Эрнеттей,
Ав мӗншӗн шыранӑ
Пысӑк тӳпеттей.

Питӗ ӗмӗтленнӗ
Пӗчӗк Эрнеттей:
— Тупасахчӗ, — тенӗ, —
Пысӑк тӳпеттей!"

Хӑҫан ӗмӗт тулӗ,
Ҫитӗ шутлани,
Ах, хӑҫан-ши пулӗ
Савӑнӑҫ парни?

Ку ĕç пулнă ĕлĕк,
Хуçасем пур чух, —
Халь ĕнтĕ вăл тĕлĕк —
Хуçасем халь çук.

Ун чух йывăр пулнă
Пурнăç пурăнма,
Питĕ йывăр пулнă
Сумлă çын пулма.

Пире мĕншĕн кирлĕ
Пысăк тӳпеттей? —
Ун вырăнне пирĕн
Чăн пысăк телей.

Пĕтнĕ хура халăх —
Халăх ырлăхра, —
Чи телейлĕ пурнăç
Пирĕн Çĕршывра!

Калас килет манăн
Хамăн сăмаха
Питĕ те сăнарлăн
Питĕ юмахла.

Пĕчĕкçĕ хĕр-ывăл
Пурте Эрнеттей.

## ЮСПА КĂМПА

Юр пек шурă Юс ыр сунчĕ
Мăн калпаклă Кăмпана:
— Кам пулатăн эсĕ, Сунчăк,
Паллаймарăм-ха сана?

Питĕ лăпкăн хуравларĕ
Ырă кăмăллă Кăмпа:
Шурă Юс, чăнне каларăн,
Сунчăк майлă эп сăнпа.

Анчах эп Кăмпа пулатăп,
Пысăк çĕлĕклĕ Кăмпа:
Çумăрпа шăтса тухатăп,
Çитĕнетĕп ăшăпа.

Вăрманта мана шыраççĕ
"Кăмпа çумăрĕ" çусан,
Курсанах хисеп тăваççĕ,
Саламлаççĕ пуç тайса.





## ЮХАНШЫВ

— Юханшыв, ăҫта васкан,
Эс ăҫтан хăват илен?

— Аван мар та вăйханма* —
Ҫулăм питĕ вăрăм ман:
Эп килетĕп инҫетрен —
Ҫăлкуҫсем нумай ҫĕртен.

— Юханшыв, ăҫта васкан,
Ыртăн пулĕ — выртса кан?

— Аван мар та вăйханма —
Эп ҫуралнă васкама:
Васкавра ман ăнăҫу —
Унсăр пурнăҫ ăнас ҫук.

## ЯКУРККА

Айванкка —
Якуркка:
Палламасть пĕр кайăка,
Палламасть пĕр курăка.

Ак — автан,
Ак — ҫăхан,
Эп паллатăп вĕсене —
Туссемпе тăшмансене.

---

* Вăйханма — вăй кăтартма, вăйпа палăрма

Ак — арлан,
Ак — чарлан:
Пĕри хире кăмăллать,
Тепри шыва юрататъ.

Ак ку — хĕрен,
Ку та — хĕрен:
Пĕри вĕçет уçлăхра,
Тепри ӳсет пахчара.



# ТУПМАЛЛИ

Кулăш ........................................... 3
Телейĕм пур ........................................... 4
Ачалăх ........................................... 5
Аттепе анне те эпĕ ........................................... 6
Анне пилĕ ........................................... 7
Асанне ........................................... 9
Арбуз ........................................... 10
Айван ........................................... 11
Аслатиллĕ çумăр ........................................... 12
Актай ........................................... 13
Арпашу ........................................... 14
Арăслан ........................................... 15
Али-паттăр ........................................... 16
Анчăк-йытă ........................................... 16
Акăш ........................................... 17
Ах-ах-ах ........................................... 18
Ах ........................................... 18
Ăсансем ........................................... 19
Бегемот ........................................... 20
Виçĕ сунраçă ........................................... 21
Вăркка ........................................... 22
Вĕшлепе Тилĕ ........................................... 23
Горизонт ........................................... 24
Ĕçлеçи ........................................... 25
Кăрккапа ача ........................................... 27
Кăрккапа Хур ........................................... 27
Качака ........................................... 28
Кăрккапа Кампур ........................................... 29
Кашкăрпа Тилĕ ........................................... 29
Качакапа Хураçка ........................................... 30
Куянкка хăнара ........................................... 32
Каппай автан ........................................... 35
Ăманпа хăлат ........................................... 36
Куянпа кашкăр ........................................... 36
Куянпа чăрăш ........................................... 38
Кăткай ........................................... 39

Каçтаки ........................................ 43
Каç килсессĕн ................................ 45
Кайрăмăр ...................................... 47
Кăмпасем ...................................... 48
Куккук ........................................... 49
Кушакпа шăши ............................ 53
Куляну ........................................... 54
Кăнтăрчи ...................................... 55
Кампурпа хур ................................ 56
Крокодил ...................................... 56
Кашкăрпа куян ............................. 57
Куляну ........................................... 64
Кукуруза ....................................... 65
Кукшапуç ...................................... 66
Куккук ........................................... 66
Кулмăш ......................................... 68
Кăмăлланăм ................................. 69
Микки Кулайĕ ............................... 70
Мыскара ........................................ 72
Мăйпăран ...................................... 73
Мĕнле тытаççĕ ............................. 74
Пулмăш ......................................... 74
Пулăш пичче ................................. 75
Пăри пăтти .................................... 77
Пиçенпе хĕрен .............................. 78
Пурăшпа тилĕ ............................... 78
Пăсара .......................................... 79
Сыхлав .......................................... 80
Рак-хĕскев .................................... 81
Серте ............................................. 82
Сарă кайăк .................................... 84
Сăвапсăр кун ................................ 85
Çăка .............................................. 86
Çурхи уяв ...................................... 87
Çăкăр тавĕ .................................... 88
Çĕр чӳклевçи ................................ 89
Çулçӳрев ....................................... 89

Тăрăлти тăри .................................... 90
Тарăху .............................................. 91
Темĕскер ........................................... 92
Тилĕпе ăсан ...................................... 93
Тилĕпе шăшисем .............................. 96
Тилĕпе кураксем .............................. 97
Тĕкĕр ................................................. 98
Туссем .............................................. 99
Тигр .................................................. 100
Улăхра .............................................. 101
Уйăхпи куççулĕ ................................. 101
Тополь .............................................. 102
Упа тата Юпа .................................. 103
Упасем .............................................. 104
Уяркка .............................................. 104
Хăрушка ........................................... 105
Хăмăр костюм ................................. 106
Хир чечекĕ ....................................... 107
Хитре кăмпа .................................... 108
Хушка Çамка .................................... 109
Хăрани ............................................. 110
Халлап .............................................. 110
Чĕкеçĕм ............................................ 111
Чее тилĕ ........................................... 112
Чĕкеçсем .......................................... 113
Чепчен .............................................. 114
Чăнах-ши? ........................................ 115
Шуçăмпи .......................................... 116
Шăнчас ............................................. 117
Ылтăн ывăс ...................................... 119
Эп кайсассăн .................................... 120
Эп каларăм ...................................... 121
Эрнеттей .......................................... 122
Юспа кăмпа ..................................... 126
Юханшыв ........................................ 127
Якуркка ........................................... 127

**Ыдарай (Васильев) Николай Васильевич**

# Детские юмористки

Стихи и сказки

*на чувашском языке*

Компьютерная верстка *Р.А.Димитриевой*
Дизайн обложки *Н.Л.Лукиной*

Подписано к печати 29.02.2012
Формат 60x84/16. Бумага офсетная.
Гарнитура TimesET Chuvash. Печать оперативная.
Тираж 100 экз. Физ. печ. л. 8,25. Заказ № 25

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время»
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98. E-mail: newtime1@mail.ru

35,00